# СУНТАЛ

ЂĂВАШ ПИССАТТĔЛСЕМПЕ
ШУРНАЛИССЕН „КАНАШ"
СОЙУСĔН ШУРНАЛĔ

№ 2 (20)
ФЕВРАЉ, 1926 ÇУЛ

Отделу Печати



С. С. Р. С-ăн Хĕрлĕ çарпа Тинĕс флоЂĕн комиссарĕ ВОРОШИЛОВ йулташ.

## „СУНТАЛ“ ПОТПИСҪЁКЁСЕНЕ.

**Ҫак №-тен пуҫласа малашне „Сунтал“ пысăклатнă форматпа тухма тытăнат. Вăл формата куҫасси ҫинҫен ретаксине вулакансем те ҫыркаланăҫҫĕ, анҫах типокрафинҫе машшинă майа килейменнипе, халиҫҫен ĕлĕкхи пекех кăларса тăма тиврĕ. Халĕ „Сунтала“ кăларас ĕҫе тепĕр типокрафине патăмăр. Ҫакăнпа пĕрлех унăн форматне те улăштартăмăр. Ҫак урăхлатнă формат потписҫĕксене килĕшни-килĕшменни ҫинҫен ретаксине ҫырса пĕлтерме ыйтатпăр.**

**„СУНТАЛ“ РЕТАКСИЙĔ**


## НА СКЛАДАХ ЧУВАШПРОИЗВОДСОЮЗА

**в Канаше, Алатыре и Чебоксарах имеются в продаже**

**ПЛУГИ ВСЕВОЗМОЖНЫХ МАРОК И ДРУГИЕ СЕЛЬСКО-ХОЗЯЙСТВЕННЫЕ МАШИНЫ, А ТАКЖЕ И ЖЕЛЕЗО-СКОБЯН. ТОВАРЫ в большом выборе.**

**Кооперативным организациям, состоящим членами Чувашпроизводсоюза и корреспондентами Чувашсельхозбанка предоставляется кредит: по отуску сельско-хозяйст. машин и орудий СРОКОМ ДО ДВУХ УРОЖАЕВ, а на железо-скобяные товары СРОКОМ ДО ДВУХ МЕСЯЦЕВ.**

**В скором времени ожидается к прибытию новые партии разных сел.-хозяйствен. машин и орудий и технич. товаров**

**ЦЕНЫ перечислен. товаров ниже рыночных.**

*Правление Чувашпроизводсоюза*

**„Сунтал“** ҫăвашсен пĕртен-пĕр илемлĕ литтераттурă шурналĕ.

**„Сунтал“** ҫăваш пурнăҫне калавсенҫе, трамăсенҫе, кометисенҫе, сăвăсенҫе, пĕр сăмахпа каласан, литтераттурăн пур майĕсемпе те ҫутатса тăрат.

**„Сунтал“** вырăссен йе йут патшалăхри халăхсен литтераттурипе ҫăвашсене паллаштарат.

**„Сунтал“** ҫăвашсен ҫĕнĕрен ҫуралакан литтераттурă вăйĕсене хăй тавра пуҫтарса йертсе пырат.

**Шкулсем, ҫуткрушоксем,** сирĕншĕн „Сунтал“ кирлĕрен те кирлĕ шурнал.

**Ҫăваш литтераттурине йуратакансем,** „Сунтал“ сирĕншĕн ҫи хаклă шурнал.

**Ҫăваш хресҫенĕ, мĕн пур ҫăваш ĕҫхалăхĕ,** „Сунтал“ илмесĕр ан йулăр!

ХАКĔ: 1 уйăха—20 пус; 3 уйăха—60 пус; 6 уйăха—1 тен. 20 пус; 1 ҫулталăка—2 тенкĕ

**АТРĔСĔ: Чебоксары, М.-Советская, д. Совдепа № 15, контора газеты „Канаш“.**

*Иккӗмӗш çул тухать.*

*Пӗтӗм тӗнђери пролеттарисем, пӗрлешӗр!*

Уйăхра пӗрре тухать.

**ХАКӖ:**
пӗр уйăха — 20 п.
3 уйăха — 60 п.
6 уйăха 1 т. 20 п.
1 çула 2 тенкӗ

# СУНТАЛ

**Ђăваш писсаттӗлсемпе шурналиссен „Канаш“ сойусӗн литтераттурă, политтӗк тата наукă шурналӗ**

„КАНАШ“ ХАÇАТ ÇУМӖНЂЕ ТУХАТЬ.

**Ретакси атрӗсӗ:**
Чебоксары,
М.-Советская ул.,
дом Совдепа 15.
Телефон № 47.

**№ 2 (20)** | **ФЕВРАЉ, 1926 çул.** | **№ 2 (20)**

**ШУРНАЛТА ПУРРИ:** ВОРСШИЛОВ — Хӗрлӗ çар — килӗшӳ тӗрекӗ. Ç. ЙАККОВЛЕВ — Февраљти револютсин 9-мӗш çулӗ. ПАТМАН — Мӗншӗн? *(Малалли)*. ХУММА ÇЕМЕНӖ — Варвари *(Пйесса)*. СОЛĂТТĂВ М. — Криттиккăллă статйасем. Академик Марр о культурной работе. АРИС, ХУСАНККАЙ — Сăвăсем. Пуштă йешђӗкӗ.

# ХӖРЛӖ ÇАР—КИЛӖШӲ ТӖРЕКӖ.

Сотсиалисăмпа Совет Сойусӗн хӗç-пăшаллă вăйӗсем пуçланни 9 çул çине кайать. Хӗрлӗ çар туни 8 çул тултарнине Совет Сойусӗнђи ӗççыннисем те, тата тăнлапуçлă пӗтӗм тӗнђери пролеттариат та уйавласа иртерççӗ. Çак праçник пӗтӗм тӗнђери пролеттариата хайӗн кӗрешӗвӗнђи малти ређӗсенђе ӗçлекенсемпе хресђенсен çарӗ хайар хӳме пек тани çинђен татах аса илтерет. Çав çар пролеттарла револютси варçса илнисене сыхлать.

Ӗçлекенсемпе хресђенсен патшалахӗ ђăн ђăнах килӗшӳ политтӗкки тытса пынине пӗтӗм тӗнђе пӗлет; 1918 — 21-мӗш çулсен тапхăрӗнђе, краштăн варçи вăхăтӗнђе, империалиссем хупăрласа илнӗ ђухне ӗçлекенпе хресђен халахӗ тӳссе ирттернӗ инкексем тепӗр хут пуласисенђен сыхланас шухăшпа пирӗн патшалах йаланах асра тытать. Ун ђухнехи инкексем пӗтӗм çӗршыва ишӗлтерсе. йађӗç, выçлах-кӳђӗç, ђухăнлатрӗç. Ӗçлекенсемпе хресђенсен правиттӗлстви çак хаљхи вăхăтри килӗшӳллӗ ӗç саманине малашне те хаљхин пекех çирӗп таратасшăн. Çав майпала вăл пит сахал шутлă çарсем усрать. Сахал пулсан та, çав çарсен пысăк ђаплă ӗç тумалла, вăл — кирлӗ вăхăтра ӗçлекенсемпе хресђенсен çӗршывне тăшмансенђен çирӗппӗн сыхласси пулать.

Советсен хӗç-пăшаллă вăйӗсем, ытти патшалăхсемпе танлаштарсассăн, тӗнђере ђи сахал шутлă вăйсем пулса тăраççӗ; шуђӗ тăрăх вӗсем Франтсин хӗç-пăшаллă вăйӗсенђен кайра шутланаççӗ. Пирӗнпе йунашар пурнакан патшалăхсен хӗç-пăшалла вăйӗсем шуђӗ тăрăх анђах иртме мар, вӗсем технӗккипе пирӗн Хӗрлӗ çартан вăйлă. Франтси çӗрӗнђе 1925-мӗш çулта 685,000 салтак пулнă, Хӗрлӗ çарта — 562,000. Пирӗнпе йунашар пурнакан çӗр-шывсенђи çар хисепӗ (Финљантире, Естонире, Литвара, Латвире, Пољшара, Румынире) 581 пин шутланать. Çав çӗрсенђе кашни 1000 çын пуçне вăтамран 10—11 çар çынӗ тивет, пирӗн кашни 1000 çын пуçне 4 çар çынӗ анђах тивет.

Пирӗн çар пӳтшеђӗ (прођђăн тăрăх илсен) пӗтӗм патшалăх пӳтшеђӗпе пӗтӗм Европпăри патшалăхсемпе, пуринђен ытла хамăр кӳршӗ патшалăхсемпе танлаштарсан, ытла та пӗђӗккӗ куранать вăл. Пољшăн çар пӳтшеђӗ пӗтӗм патшалăх пӳтшеђӗн 39 прођђăнӗ пулать, Латвин — 29, Естонин — 25, пирӗн Совет Сойусӗн çар пӳтшеђӗ пӗтӗм Сойус пӳтшеђӗн 15 прођђăнне те çитмест.

Хӗрлӗ çарăн 8 çулхи йупилей праçникӗ Халăхсен Лики хӗç пăшал вăйӗсене ђакарасси çинђен шавлама тапратнă вăхăт тӗлне пулђӗ. Хӗç-пăшал вăйӗсене ђăнах ђакарас тенине Хӗрлӗ çар, хамăр çӗршыври пур ӗççыннисемпе пӗрле, пит хапăл туса йышăнна пулӗђђӗ. Анђах хӗрлӗ салтаксем пурте, ретавой çапаçу çынӗнђен пуçласа асла комантире, политрапотнӗке çититђенех, çав империалисла патшалăхсем хӗç-пăшал вăйӗсене ђакарас пирки конферентси пухма хăтланни ђаннипе мӗн иккенне пит лайăх пӗлсе тăраççӗ.

Хаљтерех анђах епӗр çав империалиссем йепле, хӗç-пăшал сăрланине пит уççăн куртăмар. Вашшинктон хулинђе 1921—22 çулта пулса иртнӗ конферентси çав тӗлӗшрен пит лайăх пример. Вăл конферентси тинӗс вăйӗсене ђакарасси çинђен йышăннисем кайран пулса иртнӗ пурнăçран усаллăн кулмаллискерсем выранне анђах тăрса йулђӗç.

Халăхсен Ликине йертсе пыракансем хӗç-пăшал вăйне ђакарас пирки мӗншӗн халӗ шухăшлама тапратса йанисем çинђен тӗплӗн шалалла кӗмесӗрех, пирӗн çапах та çапла калама тивӗç: хайсен пролеттариатне експлуататсилеппе, колонисене, тата хайсене пăхăнакан патшалăхсене тем пек хӗсӗрленипе ыра пурнăçӗ тытапса тăракан империалисла патшалăхсем хӗç-пăшал вăйӗсене ђакарма хатӗрри çинђен каланисене Совет Сойусӗнђи ӗççыннисем пӗрре те ӗненме пултараймаççӗ.

Çапах та, хӗç-пăшал вăйӗсене ђакарас тӗлӗшпе ђăнахах, пӗр икӗ питленмесӗр ӗçлени Совет Сойусӗшӗн тата ӗçлесе пурнакан пур етемшӗн те пысăк ырлăх пулнă пулӗђђӗ. Ун пирки иккӗленмелли çук.

Ахаљ куранакан хӗç-пăшалла вăйсене кăна мар, тата вăрттăн ӗçлекен фашшисла майлисене те ђакарас мӗн пулсассăн, империалисла патшалăхсенђи ӗççыннисем йавăр çар налоксенђен хăтăлса çăмăллăн сывласа илнӗ пулӗђђӗç, пусмарта пурнакан колонисенђи халăхсем ирӗке тухӗђђӗç. Анђах, хуйхине пула, кашни империалисла патшалăхăнах клас сăнӗ, хӗç-пăшалла вăйсене ђапах ђакарма пама мар, хӗç-пăшалсăрланасси çинђен нумай кашкарса хайпе амăртакансем хӗç-пăшалланине наљарлатас та, харпăр хайӗнне вăйлатас тесе анђах тăрăшать.

Совет Сойусӗн правиттӗлстви империалисла правиттӗлствăсем пек мар. Çаратас шухăш çук унăн, кӳршӗ халăхсен ирӗклӗхне тапăнас шухăш та çук.

Пирӗн сахал Хӗрлӗ çарăн ӗçӗ—вăл патшалăх ђиккисене сыхласси, тата хамăр патшалăхри пурнăç лапкă пултăр тесе сыхласси пулать.

Хӗрлӗ ҫар, хӑй утса тухнӑ ҫулне ҫаврӑнса пӑхсан, хӑй мӗн тунине хисеплесе тухма пултарат̆.

Ревоԓутсиллӗ Ҫар Совеђӗ тунӑ реформӑ, Хӗрлӗ ҫарӑн ӗмӗр манми пуҫӗ Михаил Ваҫҫилйевиђ Фрунҫе йертсе пынипе, пӗлтӗр ӗҫе аванлатса йађӗ. Тепри, тата вырӑнсенђи оркӑнс м йӗркеллӗ ӗҫлени Хӗрлӗ ҫарта тӑвас ӗҫсене пур ҫӗрте те аван тума пулӑшрӗ.

1903-мӗш ҫулта ҫуралнисене ҫара ђӗнни пирӗн ҫар аппараҭӗшӗн ексамӗн пулса тӑђӗ: ҫарта пулмалли ҫинђен саккун тухсан, первӑй ҫара илђӗҫ.

Ҫав ексамӗна пирӗн оркӑнсем лайӑх тытрӗҫ. Ӗҫлекенсемпе хресђенсен ҫамрӑкӗсем пуханмалли пунктӑсене пурте вӑхӑтра пыђӗҫ; ԓкоттӑсене пӑрахнисем, тухтӑра пӑхтармасӑрах ҫара кайнисем, сахал мар пулђӗҫ. Ҫавӑ ӗҫлекенсемпе хресђенсем тӑнлӑрах пулса кайнине, вӗсем хӑйсем краштӑн парӑмпе тӑнланса илнине пӗлтерет.

Териттори ҫарӗ тӑвас ӗҫ йулашки вӑхӑтра ђылай малалла кайрӗ. Иртнӗ кӗркунне пухнӑ териттори тивиҫийӗсем ӗлӗк пухнисенђен лайӑхрах вӗренђӗҫ. Териттори тивиҫийӗсенђи хӗрлӗ салтаксем хӑйсем политтӗк тӗлӗшӗнђен вӗренсе ҫитнипе, тата ҫар ӗҫне те ђылай пӗлнине кӑтартрӗҫ. Териттори ђаҫӗсен кӑмантирӗсем, салтаксене пухман вӑхӑтра нумай ӗҫленӗскерсем, ҫак ҫӗнӗ ӗҫре мӗнле ӗҫлеме кирлине курђӗҫ, хаԓ вӗсем вӗрентсе кӑтартса пырас ӗҫре хӑйсене шансарах ӗҫлеҫҫӗ. Политтӗк оркӑнӗсем те хытӑрах ӗҫле пуҫларӗҫ, ӗҫлемелли майсене лайӑхлатрӗҫ. Комантирсем хӑйсем нумай ӗҫлениие пӑшал пеме вӗренес ӗҫ те малалла кайни сисӗнђӗ. Пирӗн териттори ђаҫӗсем ҫар ӗҫне ђылай пӗлсе ҫитрӗҫ, пӗр-ик ҫултан вӗсем катрови ђаҫсемпе танлашса ҫитӗҫ.

Катрови ҫарсем те ҫар ӗҫне вӗренес ӗҫре пур ҫӗрте те малалла пысӑк утӑм турӗҫ.

Артиллери, хурҫӑланӑ вӑйсем, тата техниђӗски ђаҫсем, ҫав укҫа нумайтарах тӑктаракан йапаласем, хытӑ ӗҫленипе пӗлтӗр ђылай ӗҫ турӗҫ. Ҫара химиллес тӗлӗшпе пит ӗҫлеҫҫӗ. Сыхланас ӗҫре ђапла вырӑн йышӑнса тӑрса, пирӗн хӗрлӗ авиатси пур тӗлӗшрен те пит малалла кайрӗ. Совет Респуплӗксен Сойусӗнђе наукка ҫыннисем химипе авиатси ӗҫӗнђе пит хытӑ ӗҫлеҫҫӗ, пирӗн наукка тупнисем вӑл ӗҫсенђе ыттисемпе танах.

Пирӗн тинӗс флођӗ ҫине пӑхсан вӑл, ӗҫлеме йавӑр пулсан та (укҫа сахал пани, тата ыт.), ҫар ӗҫне вӗренсе ҫитес тӗлӗшрен те, карапсене йусас тӗлӗшрен те нумай ӗҫлерӗ, ҫӗнӗ карапсем тӑвас тӗлӗшрен те ӗҫлерӗ.

Пирӗн флотсем вӗренмелле ишсе ҫӳренисенђен, тата Хура тинӗспе Палти тинӗсӗ ҫинђи флотсем йут патшалӑхсене кайса ҫӳренисенђен, пирӗн тинӗс флођӗ малалла кайса, лайӑхланас ҫул ҫине тухни палӑрђӗ.

Иртнӗ ҫула ҫаврӑнса пӑхсассӑн, пирӗн ҫапла калас пулат̆: хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйсене тӑвас ӗҫе пит ђарса тӑракан йапала — патшалӑх укҫа ҫителӗклӗ паманни пулђӗ. Пирӗн патшалӑх пӳтшеђӗшӗн хаԓ парса тӑракан укҫа та питйӑвӑр килет, — епӗр ӑна лайӑх пӗлетпӗр. Анђах Хӗрлӗ ҫара тӑвас ӗҫ укҫа ҫитейменнипе аптрат̆.

Пирӗн патшалӑх пӳтшеђӗ, ӗлӗкхинђен ӳснӗ пулсан та, малалла та ӳсес пек туйӑнат̆ пулсан та, ҫарпа флот ӗҫне темиҫе ҫул хушши пӗр пек парса тӑна укҫаран (15—16 прођђӑн) ытларах пама пултараймаст̆ пулӗ.

Ҫавӑнпа пӗтӗм Хӗрлӗ ҫарӑн, ахаԓ салтакран пуҫласа аслӑ нађалԓӑка ҫитиђђен, пурин те пит тирпейлӗ пулмалла. Пурин те пӗлес пулат̆: ҫар ветомствине панӑ кашнӑ пусах перекетлӗ, усӑллӑ ҫӗре салатма тӑрӑшмалла.

Ҫавӑн пек тусан анђах епӗр Хӗрлӗ ҫар пурнӑҫне аванлатма пултаратпӑр. Пирӗн патшалӑх ҫирӗпленсе ҫитиђђен урӑх ним тумалли те ҫук.

Хӗрлӗ ҫар пурнӑҫӗ йулашки вӑхӑтра аванланни ҫителӗклӗ мар. Анђах 1925—26-мӗш ҫулти Хӗрлӗ ҫара краштӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнђипе танлаштарса пӑхсан, ђи хӑрушши, ђи йӑвӑрри кайа выртса йулђӗ, теме пулат̆.

Хӗрлӗ ҫар тӗнђере ђи темократиллӗ ҫар.

Пирӗн кӑмантирсем империалисла ҫарсенђи кенерал шалувӗсем ҫинђен шухӑшламаҫҫӗ вӗсем, анђах вӗсем пӗлеҫҫӗ: С.Р. Сойусӗн пурнӑҫӗ лайӑхланса пынӑ майӗпе вӗсен пурнӑҫӗ те лайӑхланса пырӗ.

Патшалӑха сыхлас ӗҫре ђи ыратакан вырӑн — вӑл пирӗн ҫар промышлӗннӑҫне лайӑхлатасси. Тӑвакан хатӗрсем пит хакли, тата хатӗрӗсене условисенђе, токӑвӑрсенђе каланӑ пекех тӑвайманни пирӗн ҫар промышлӗннӑҫӗ ђирленине пӗлтерет. Ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерес тесен, ҫар промышлӗннӑҫ ӗҫне пӑхакансен те, ҫав промышлӗннӑҫра ӗҫлекенсен те ӗҫе пит астуса тӑвас пулат̆.

Кӑҫал ҫар ветомстви ҫар хатӗрсем тутарма анђах мар, ҫар промышлӗннӑҫӗ валли тӗп кӑпиттал тума та укҫа панӑ.

Хӗрлӗ ҫара пӗр пит кирлӗ йапала ҫинђен кӗскен каласа парас пулат̆ — вӑл ӗҫлекенпе хресђен патшалӑхне сыхлас ӗҫе пӗтӗм патшалӑх пулӑшасси.

Империалисла вӑрҫапа краштӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнђе курнинђен епӗр пӗлетпӗр: вӑрҫӑ пулас пулсан, патшалӑхри пӗтӗм укҫа сыхланас ӗҫе кайат̆, патшалӑх оркӑнӗсен пурин те ҫав ӗҫе ӗҫлемелле пулат̆. Ҫавӑнпа халех пӗтӗм вӑйпа ҫакна тума тӑрӑшмалла: пур ветомствӑсен те Хӗрлӗ ҫарӑн кирлӗ оркӑнсемпе ҫыхӑнса тӑмалла, патшаллӑх сыхланма пултарассине вӑйлатас тӗлӗшпе мӗн мӗн тума кирли ҫинђен пӗрле ӗҫ туса татмалла. Мӗн тума кирли ҫинђен пӗтӗм совет оркансатсийӗсем малтанах шухӑшласа, килӗшӳ тусан анђах, ҫапӑҫу пуҫлансан малтанхи кунсенђе пӑтрашса каймалла мар.

Йулашкинђен тата Хӗрлӗ ҫар умӗнђе тӑракан тепӗр кирлӗ ӗҫ ҫинђен калас пулат̆: вӑл — саппас салтак, ђи малтан саппас кӑмантирсем хатӗрлесси. Лӑпкӑ вӑхӑтри сахал ҫар вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе хӗҫ-пӑшаллӑ пысӑк вӑй пулса тӑмалла: хаԓхи технӗккӑ ђухне сахал вӑрҫсан та, пит нумай кӑмантир кирлӗ пулат̆.

Ҫавӑнпа пур патшалӑхсем те, пуринђен ытла Франси, Йаппони, Анкли, тата Америк ҫаван ҫинђен шухӑшлаҫҫӗ, вӗсенђен нумайӗшӗ ҫав ӗҫе мӗнле тумаллине шухӑшласа та тупнӑ.

Епӗр ҫав ӗҫе тума пит кайран пуҫларӑмӑр. Ҫавӑн тӗлӗшпе епӗр аслӑ шкулсемпе иккӗмӗш сыпӑк шкулсенђе ђасрах ҫар ӗҫне вӗрентмелле тӑвасшӑн. Ун пек саккун тухассине кӗтмесӗрех хаԓ Мускавпа вырӑнсенђе ҫав ӗҫе пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ.

Хӗрлӗ ҫар политтӗк тӗлӗшӗнђен пит лайӑх тӑнланни килес ҫулта ӗҫлекенпе хресђен Сойусӗн хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйӗсем вӗренес тӗлӗшпе пит хытӑ, ҫине тӑрса ӗҫлессине пӗлтерет.

Парттипе политтӗк ҫинђен вӗренес ӗҫ сарӑлса, вӑйланса пырат̆. Ҫарпа флотра партти орканисатсийӗ ӳссе пырат̆, 1924-мӗш ҫулта окт̆апӗрӗн 1-мӗшӗнђен пуҫласа ҫулталӑкђен вӑл 34 прођђӑн ӳснӗ. Комсомол пит нумайланса ҫитрӗ, ҫарпа флотра комсомоԓтсӑ шуђӗ 90 пин ҫынтан иртнӗ пулмалла.

Кӑмантирсемпе салтаксене ҫар ӗҫӗне политтӗк ҫинђен вӗрентни пирки, ђаҫсемпе уђрештенисене, штапсене лайӑхлатнӑ пирки, технӗкка вӑйлатас тӗлӗшпе пӗр канмасӑр ӗҫленӗ пирки, — Хӗрлӗ ҫар хут̆ хӑҫан та ӗҫлекенпе хресђен правиттӗлстви хушсанах, Совет Сойусӗн ђиккисене сыхлама сиксе тӑрӗ. Ӗҫлекенсемпе хресђенсем Хӗрлӗ ҫар пирӗн патшалӑх ђиккисене сыхласса шанса тӑма пултараҫҫӗ.

*ВОРОШИЛОВ й. статйи,*

# Февраԉти револԉутсин 9-мĕш çулĕ.

Расçей патшалăхĕнԉе пуранакан халăхсем темиçе ĕмĕр патшасем пусмăрлăхне тӳссе пуранна. Самотершави нихçан та пĕтес çук пек пит тĕреклĕ ларнă. Çав темиçе çĕр çул тăрăшĕнԉе самотершавипе кĕрешсе, ăна сирпĕтсе халăха ирĕке кăларас тесе халăхăн ԉи лайăх аԉисем (револԉутсионерсем) шутсăр нумай пĕтнĕ: вĕсем тĕрмепе каттăркăран хăрамасăр, хăйсен çамрăк пуçĕсене хĕрхенмесĕр патша правиттĕлствипе пĕр ԉаранмасăр кĕрешнĕ, анԉах ĕçлекен халăх патшана хирĕç тăмассерен, кашнинԉе патша правиттĕлстви револԉутсийе йун айне пытарнă.

1905-мĕш çулта, револԉутси пуçлансан, самотершави пĕтме патнех çитсеԉĕ; вăл пĕтсе ларĕ, Расçей халăхĕ йулашкинԉен ирĕке тухĕ тесе калама та шанԉăк пурԉĕ, анԉах вăл çул та патша йыттисем (шантармсем, страшниксем) халăха ирĕке тухма памарĕç; револԉутси йун айне путса ларԉĕ, патша пĕр вăхăта вырăнĕнԉех ларса йулԉĕ.

Çапах та 1905-мĕш çулхи револԉутсин урокĕ ахаԉ иртмерĕ: ĕçлекен халăх хăйне пусмăрлакансене тата вăйла курайми пулԉĕ. Ĕçлекенсемпе хресԉенсен пирвайхи револԉутси, ĕçлекенсемпе хресԉенсен сойусĕ çирĕплĕ пулман пирки, салтаксем ĕçлекенсен йенне вăхăтĕнԉе çаврăнайман пирки пĕтсе ларнине кура, çаксене асра тытса, малашне пĕрлешсе, пĕр сăмахра пулса кĕрешме вăй илнĕ.

1917-мĕш çулта ĕçлекенсемпе хресԉенсем пĕр сăмахра пулса патшана вырĕнĕнԉен сирпĕтсе пăрахрĕç.

Револԉутси тума вăрçă пит пулăшрĕ: Кермани вăрçи пирки Расçей патшалăхĕн хуçайстви те, промышлĕннăçĕ те илемсĕр пĕтсе ларԉĕ, ĕçлекенсемпе хресԉенсен ĕлĕк те йывăр, хĕн пурнăçĕ тата та наԉарланԉĕ, пĕтĕм ĕçлекен халăх патшана шутсăр курайми пулԉĕ.

Февралĕн пирвайхи ԉислисенԉен пуçласа тĕрлĕ тĕлте сапастовккăсем хускалса кайрĕç. Мартăн 10-мĕшĕнԉе (кив çтилпе 24-мĕш февраԉ) 50 претприйатти пăлханнă; пĕр Ленинкратра кăна пастовккă тăвакансем 97,000 çынна çитнĕ, тепĕр кунне 190—200 пине çитнĕ: мартăн 12-мĕшĕнԉе (к. ç. 26 фев.) 250—260 пинтен те иртнĕ; çав кун каçпа Выпăрк районĕ пĕтĕмпех ĕçлекенсен аллинԉе пулнă.

Правиттĕлствă пăлханакан ĕçлекенсене хирĕç салтаксем тăратнă, анԉах вăл ԉухнехи салтаксем 1905-мĕш çулхинԉи пек пулман, вĕсем хаԉ ĕçлекенсене хирĕç тăмар, вĕсене револԉутси тума пулăша пуçланă.

Волынски, Павловски, Литовски тата ытти полкăсем те ĕçлекенсен йенне çаврăннă. Çĕнĕ çтилпе мартăн 12-мĕшĕнԉе (26 февр. к. ç.) револԉутси пуçланса кайрĕ. Йунлă Микулай патшана сирпĕтсе антарԉĕç. Çав кунах комуниссен парттийĕ тăрăшнипе, вăл кăтартса пынипе ĕçлекенсемпе салтаксем хăйсенԉен теппутатсем суйласа Совет суйларĕç—ĔÇЛЕКЕНСЕМПЕ САЛТАКСЕН ТЕППУТАԈĔСЕН СОВЕԈĔ. Ԉи малтан çак совет ĕçлекенсен влаçне йепле сыхласси çинԉен тĕплĕ шухăшлама пуçларĕ, ĕçлекенсене хĕç-пăшалсем парса-салатса револԉутсийе сыхлама май шырама пуçларĕ.

Мартăн 15-мĕшĕнԉе влаçа вăхăтлăх правиттĕлствă илԉĕ; ку правиттĕлствăра ĕçлекенсенԉен пĕр министăр та пулман, пурте пуршуйсемпе меншевиксенԉен пуçтараннăскерсем пулнă. Вăхăтлăх правиттĕлствă малтан, патшана вырăнтан ӳкериԉԉен, ĕçлекенсен майлă тăрăшнă пек хăтланнă пулсан, кайран, влаç хăй аллине çаклансан, ĕçлекенсем ԉăн ирĕклĕхшĕн тăрăшма пуçласан, вĕсенԉен хăраса револԉутсийе хирĕç тăнă.

Ĕçлекенсемпе салтаксен теппутаԉĕсен Советне çаклантă меншевиксемпе есерсем: „епĕр Вăхăтлăх правиттĕлства вырăнтан ӳкермесĕрех вĕсене револԉутси майне çаврăпăр, вĕсене йепле те пулин хирĕçтерес марԉĕ“,— тесе ĕçлекенсене йăпатса тăрасшăн пулнă, анԉах Комуниссен парттийĕ вĕсене ĕçлекенсене улталама паман; Комуниссен парттийĕ, хăйĕн прокрамми тăрăх, револԉутси пуçлансанах вăрçа ԉарасси çинԉен, тата пĕтĕм влаçа Совета парасси çинԉен ĕçлекенсене вĕренте пуçланă. Куллен куна пĕтĕм влаçа Советсене парас тийекенсем, Комуниссен парттине йуратакансем нумайланнăçем нумайланса пына. Вăхăтлăх правиттĕлствă патша çулĕпех пынине сиссе, вăл револԉутсишĕн тăрăшма кăна мар, револԉутсийе мĕн вăйĕ çитнĕ таран ԉарса, кансĕрлесе тăнине сиссе, ĕçлекенсемпе хресԉенсем Комуниссен парттийĕ кăтартнă тăрăх, вăл йертсе пынипе 7-мĕш нойапĕрте (25-мĕш октапĕр к. ç.) халăха улталаса тăракан Вăхăтлăх правиттĕлствăна сирпĕтсе влаçа хăйсен аллине илԉĕç. Февраԉти револԉутси вăл—Октапĕрти револԉутси патне илсе пыракан çулăн пирвайхи утăмĕ.

Патша вăхăтĕнԉе Расçейре пуранакан вак-халăхсене (вĕсен шутĕнԉе пирĕн ԉăваш халăхне те) пурăнма пит те хĕсĕкԉĕ, самотершави пĕтнĕ куна натси пусмăрлăхĕ пĕтсе, путланса ларнă кун теме пулаť, анԉах Февраԉти револԉутси пире вак халăхсене ԉăн çăлăнăçах, çителĕклĕ танлăх параймарĕ; натси танлăх марри аранԉă çăмалланă пек пулԉĕ те, анԉах кирлĕ таран çителĕклĕ пулаймарĕ, çак йенԉен те Фавраԉти револԉутси Октапĕрти аслă револԉутсине илсе пыракан çул та малтанхи утăм çех пулԉĕ: натси ыйтуне тĕрĕссипе вырăна, пурнăçа кӳртекенни, вак халăхсене пусмăрлăхран, тĕттĕмлĕхрен çăлăнăçа, çутта кăларакканни—Октапĕрти пролеттари револԉутси пулԉĕ.

Ç. Йакковлев.

---

## ХУРАЛ ПӲРТĔНԈЕ.

Ԉик-так, ԉик так...
Сехет ĕçлет;
Хĕрлĕ салтак
Пуçне çĕклет.
—Çурçĕр çитнĕ,
Вăхăт тухма,—
Хĕç-тар патне
Хурал тăма.
Пăшал тытса
Шăлт-шалт! уçаť:
Аврласа
Çумне çакаť...
Йĕри тавра
Тĕттĕм... киԉем:
Каç хупхура,
Хаť йĕп ԉикем...
Тĕксĕм пӳртĕн
Çтени çумне
Тăнă тӳртĕн
Ленин сăнĕ.
Вăл теменшĕн
Хыттăн пăхаť;
—Ах, вилнехшим?..
Шухăш выԉаť.
Ăна кура
Салтак ԉĕри
Анлă кăкра
Кĕртех турĕ.
Çамрăк алли
Хыт ԉăмăртаť;
Пăшал вулли
Тепле ԉатаť!...
Çурçĕр çитнĕ,
Вăхăт тухма,—
Хĕç-тар патне
Хурал тăма.

Хусанкай.

# МӖН ШӖН?..

*(Йӳлашки).*

Пайан, праҫнӗк кунӗ, Кӗпӗрйанпа амӑшӗ Малти Касри ашшӗпе пӗр тӑван аппӑшӗ патне кайса килеспӗн. Кӗпӗрйан, ирхине тарсан, лашине пӑтратса пађӗ те урапине сӗрме тикӗт илме кайрӗ. Шарт Михали лавки патӗнђе ҫынсем калаҫкаласа тӑраҫҫӗ. Кӗпӗрйан, мӗн ҫинђен калаҫаҫҫӗха кусем тесе, вӗсем патне пырса тӑђӗ.

— Ес ма каймарӑн тата? тесе ыйтат̆ пӗри Кӗпӗрйантан.

— Ӑҫта?

— Хире, ҫӗмел вӑрри шырама.

— Мӗнле ҫӗмел варри?

— Ара, ес илтмени? — Пуйан Мирун ҫӗмелне вӑрласа кайнӑ тет кӗҫӗр каҫхине, тесе пӗлтереҫҫӗ Кӗпӗрйана. — Хаљ тин анђах халӑх пухса йӗр тӑрӑх кайрӗҫ, теҫҫӗ.

— Ей, ун вӑрласан та пӗтес ҫук-ҫке.

— Ҫапла та, ҫапах шалкӑ марӗ хӑйӗн хӑйне.

— Хӑйӗн шалкӑ, ҫынӑн шалкӑ мар — мӗн ђул ҫын макӑртнӑ пуђ вӑл хӑй вӑрӑсемпе ҫыхланса.

— Вӑл ҫапли ҫапла та, ҫапах та... теҫҫӗ ҫынсем ҫаврӑнкаласа пӑхса.

Кӗпӗрйан тикӗт илсе таврӑнђӗ, урапине сӗрђӗ, кил картинђи ӗҫсене пуҫтаркаларӗ те анкартине тухса тӑрланаймӑн капанне улӑм витме тытӑнђӗ — кам пӗлет, тен, ҫӑмӑр пулсан капана иселентерсе пӑрахӗ тата, терӗ. Капанне витсе пӗтернӗ ҫӗре кӑнтӑрла та ҫывӑхарса киле пуҫларӗ. Ӗҫсене пӗтерсен Кӗпӗрйан пӳрте кӗђӗ. Амӑшӗ йашка хатӗрленӗ. Апат ҫиме ларђӗҫ.

— Анне, кӗҫӗр каҫхине пуйан Мирун ҫӗмелне вӑрласа кайнӑ тет, тет Кӗпӗрйан.

— Вӑрӑпне вӑрласа тӑ пӗтерес ҫук, тет амӑшӗ, — пӗр ҫӗмел ҫухалнӑ вырӑнне ӑна пайанах Сӑрнел тутарӗсем вунӑ ҫӗмел тупса кӳрсе параҫҫӗ.

— Анђах пӗр ҫӗмелшӗн те вӑл тем те пӗр кӑшкӑрсаахӑрса пӗтрӗ тет, халӑх пуҫтарса йӗр шырама кайрӗ тет.

— Ей намӑссӑр, кӗҫҫе пит — халӑхран та вӑтанма пӗлмест вӗт, хӑй патӗнђе вӑрӑ-хурах татӑлмаст̆, хӑй пӗр ҫӗмелшӗн праҫнӗк кунӗ халӑха ӗшентерсе ҫӳрет, тет карђӑк тарӑхса.

Ҫапла каласа ларнӑ ҫӗрте Кӗпӗрйан хӑлхине халӑх шавланӑ сасӑ илтӗпсе кайрӗ. Кӗпӗрйан урам йенђи ђӳређине уҫса урамалла уртӑнса пӑхрӗ.

Анаткас йенђен халӑх кӗпӗрленсе килет. Халӑх пуҫӗнђе малта Пуйан Мирун, старӑстӑ, Иван Павӑлђӑ, Шӑрт Михали пыраҫҫӗ. Пуйан Мирун алливђи туйине йалт-йалт выђатса пырат̆. Ыттисем хыҫалтан шавласа, калаҫса пыраҫҫӗ.

— Ӑҫта кайаҫҫӗ? тесе ыйтрӗ Кӗпӗрйан халӑх йенђен ђупса килекен пӗђӗкрех ађаран.

— Тарса пытан ђасрах, Кӗпӗрйан, сан патна килеҫҫӗ, терӗ ађа васкаса.

— Мӗн тума?

— Ҫӗмеле есӗ вӑрланӑ теҫҫӗ.

Кӗпӗрйан тем тӗрлӗ хӑраса ӳкрӗ. Хӑранипе вырӑнтан та тапранаймаст̆.

— Тар ђасрах, тар, ак ҫитеҫҫӗ, вӗт, — тем туса пӑрахӗҫ, тет каллех ађа.

Ҫав вӑхӑтрах халӑх та Кӗпӗрйан патне ҫите пуҫларӗ.

— Ав, вӑл ђӳређерен пӑхса выртат̆, тесе кӑшкӑрса йађӗ тискер сассипе Сӑхӑ Ваҫли — тытӑр ӑна! тытӑр!

— Тытӑр, ан тартӑр!

Халӑх кӗпӗрленсе ђупса кӗрсе кайрӗ Кӗпӗрйан карташне. Кӗпӗрйан ђӳређине хупрӗ те, хӑранипе ниҫта кайса кӗреймесӗр амӑш ҫумне пырса йӑпшӑнса ларђӗ.

— Ах, ађам, мӗн пулђӗ? тет амӑшӗ.

— Анне, пӗтрӗмӗр, — халӑх мана кӗлте вӑрланӑ тесе хӗнеме килет.

Амӑшӗ ку сӑмахсене илтсенех ӑнсӑр пулса йӑванса кайрӗ. Кӗпӗрйан амӑшне ыталаса тытрӗ те хӑй те хытса кайрӗ.

Пӳрте ђӑн малтан Пуйан Мирунпа Иван Павӑлђӑ кӗђӗҫ. Пуйан Мирун Кӗпӗрйана курсанах кӑшкӑрса пӑрахрӗ.

— А, йӑттӑ, кӗлте вӑрламан?

Кӗпӗрйан йенне аллинђи тупӑлха туйине сулса йађӗ. Анђах Кӗпӗрйан, сулмаклӑ туйана вӑхӑтра йарса тытса, Мирун аллинђен туртса илђӗ.

— Мӗн кирлӗ сире?! терӗ Кӗпӗрйан ђӗтрекен сасӑпа.

— Акӑ мӗн кирлӗ пире! терӗ те Иван Павӑлђӑ Кӗпӗрйана сулахай хӑлхи ђиккинђен мӗн пур вӑйпа ҫатлаттарђӗ.

Кӗпӗрйан пӑрӑнса-пӑрӑнса кайрӗ. урлӑ сак ҫине амӑшӗпе йунашар тӑсӑлса выртрӗ.

— Е-е-е, ђенђешке, кӗлте вӑрлама ӑста, патаккине ҫийесшӗн мар... ҫап ӑна тата лайӑхрах, тет Мирун.

Иван Павӑлђӑпа Шӑрт Михали тата пӗр иккӗ тӑхӑнтарса илђӗҫ. Кӗпӗрйан, сак ҫинђен тӑнӑ май, пуҫне ҫӗклерӗ. Ҫав вӑхӑтрах Мирун Кӗпӗрйана ҫӳҫрен ҫӑлса тытрӗ те урайне тӑсси пӑрахрӗ. Кӗпӗрйан Мирун ҫине тем пек йӑлӑнса пӑхат̆.

— Ма хӗнеттерен, Мирун Иванђӑ?.. Еп вӑрламан вӗт сан кӗлтӳне....

Кӗпӗрйан каласа пӗтериђђенех Мирун атӑ кӗллипе тӑрс! тутарђӗ питӗнђен. Сӑран атӑ кӗлли айӗнђе темскер лӑђӑртах турӗ.

— Илсе тухӑр карташне, терӗ Мирун.

Пӳртрен сӗтӗрсе тухрӗҫ. Кӗпӗрйан пуҫран ҫапнипе анвӑ-минкӗленсе кайнӑ. Сулахай хӑлхинђен хӗп-хӗрлӗ йун йӑпӑртатса анат̆. Пиђӗ куҫӗсем, ийӗе ђӑмланӑ пек, ним йӗркесӗр пулса кайнӑ.

Кӗпӗрйана курсан ђылайӗшӗн кӑмӑл хуҫӑлђӗ. Ђӗрене такам ђӑмӑртаса тытса хӗстернӗ пек туйӑнса кайрӗ.

— Ма ҫапатӑр?.. тесе кӑшкӑрса йађӗ пӗри ђунӗ ђӑтайманнипе.

— Вӗлерес тетрем? — Ӗлкӗрӗр. малтан урапине кайса пӑхӑр — виҫи ларат̆и, ларсат̆и. Тен, вуҫах вӑл вӑрламан, терӗҫ ыттисем те.

Ҫав вӑхӑтрах Сӑхӑ Ваҫлипе Хӑнђӑр Петӗр лупасайӗнђен Кӗпӗрйан урапине туртса кӑларђӗҫ.

— Ак, пӑхӑр, терӗ Сӑхӑ халӑх йенне кӑшкӑрса. Пӑхӑр, ак кукӑр-макӑр кайри урапипе — ҫавах вӗт. Мӗн виҫсе аппаланса тӑмалла тата?

Ђӗнах та Кӗпӗрйанӑн кайри урапи леш ана ҫинђи йӗр майлах. Урапи ҫинђе те ыраш пӗрђисем, пуђаххисем сапаланса выртаҫҫӗ.

Халӑх каллех кӗрлеме тытӑнђӗ.

— Ара, кайри урапа кӗмӑн кукӑр-макӑр пулма пултарме? Латвӑ, ес пуйан та — урапусем тӗреклӗ, Кӗпӗрйан ес мар вӗт — вӑл тӑлӑх ађа, теҫҫӗ хӑшӗ-хӑшӗ.

— Пуйан... пуйан, есӗр пӗрмайах пуйан тетӗр, саннипе пуйним епе? тет Мирун.

— Пулнӑ та пулӗ, теҫҫӗ хыҫалтан хӑшӗ.

Пуйавсем халӑх ҫине сурђӑксене сирпӗте пуҫларӗҫ. Вӗсене кура вӗсен шайккиђи карма ҫӑварсем те ахӑра пуҫларӗҫ.

Пуйан Мирун Кӗпӗрйан йенне тем пек тулхӑрса ахӑрса пырат̆.

— Ҫапӑр ӑна, хӗнӗр, халӑхсем! тет.

Кӗпӗрйана каллех сӑрса илеҫҫӗ.

— Халӑх! тет сасартӑк хыгӑ сасӑпа Сурат Хветӗрӗ.—Тархашшӑн ан хӗнӗрха, хӗнеме кайран та ӗлкӗрӗр, ат̆ӑр малтан капанне кайса пӑхар Ӗлӗксенђе вӑрра кӗлтерен пӗлетђӗҫ. Мирун Иванђӑ, сан кӗлтӳсен ҫыххи мӗнле? тесе ыйтат̆.

— Куђӗ йенђен ҫыхнӑ, тет Мирун.

— А, Кӗпӗрйанӑн тӑрри йенђен—епӗ ӑна хамӑр ана ҫумӗнђе вырнӑ ђухне асӑрханӑ, тет Сурат Хветӗрӗ.

— Пӑхас капанне, теҫҫӗ халӑхсем.

— Пӑхас!!!

Анкартине кайса 5—6 урапаллӑ капанне пӑхаҫҫӗ.

— Ађсемӗрсем, йӑнӑш пултӑмӑр— кӗлтине тӑрри йенђен ҫыхнӑ, терӗҫ халӑхсем хӑрӑсах.

— Вот, ҫапӑр тесе кӑшкӑратӑр, ҫапӑр ӗнтӗ хаљ, тет Сурат Хветӗрӗ халӑха ӳкӗтлесе.

Пурте, хӑйсенђен хӑйсем вӑтаннӑ пек пулса, капанран айаккарах пӑрӑна пуҫларӗҫ. Иван Павӑлђӑ та, халиђђен Кӗпӗрйана тарасран ҫатӑртаттарса тытнӑскер, аллисене лаштах йађӗ. Ҫынсем пӗрре Мирун ҫине тепре Кӗпӗрйан ҫине пӑхаҫҫӗ. Кӗпӗрйана та ђун кӗнӗ пекех туйӑнђӗ. Анђах пуйан мӑшкӑла йулмасt̆ нихӑҫан та

— Сӳтсе пӑхар пӗтӗм капанне, тесе кӑшкӑрса пӑрахрӗ Пуйан Мирун халӑх ҫине ҫилленсе.

Капана сӳтме тытӑнђӗҫ. Туп-тулли сарӑ кӗлтесем вӑђтта вађт анђах сирпӗнеҫҫӗ. Вӑйпа ывӑтса йанӑ май типӗ ыраш йӗтем ҫине шапӑр тӑкӑнат̆.

— Ак, хайхи! тесе кӑшкӑрса йађӗ Сӑхӑ Виҫли.

— Ак, хайхи! терӗҫ ыттисем те.

Ђӑвах та, пӗр пилӗк-ултӑ йӗр сӳтсенех куђӗ йенђен ҫыхнӑ ҫыхӑллӑ кӗлтесем сиксе тухрӗҫ.

— А а-а, терӗ Пуйан Мирун кутӗнђен ҫыхнӑ кӗлтесене курсан,—ну ҫамрӑк вӑрӑ ӑҫтан тийесе килгӗн ку кӗлтесене? Ну кала?..

Кӗпӗрйан, пуҫран ҫапса анӑ минкӗлен тернӗскер, ним калама пӗл мест. Тутисене пӑркаласа аран аран.

— Кӑва аппа ађисем пулӑшмалла килсе вырса панӑђђӗ, терӗ.

Ђӑвах та пӗр кунхине Малти Касри аппӑшӗн ађисем килсе Кӗпӗрйана пӗр ђӗрӗк вырса хӑварнӑђђӗ. Ӑна йалҫыннисем те ђылайӗшӗ пӗлеҫҫӗ.

— Е-е-е! аппу ађисеми? Ҫавсем, иккен, саншӑн ман ана ҫине ытлашшиҫӗмелсем туса лартнӑ. Ак сана аппу ађисем... ак сана аппу ађисем....

Пуйан Мирун Кӗпӗрйана тулама тытӑнђӗ. Пӗтӗм халӑх ҫак тискер ӗҫе пӑхса ним тума пӗлмесӗр тӑрат̆. Ђылайӗшӗ Кӗпӗрйана тем пек шеллесе тӑраҫҫӗ, ђылайӗшӗн Кӗпӗрйаншӑн ђори ыратат̆,—Кӗпӗрйана ђипер тӑвӑ ҫӗртенех вӑрӑ туса хуни тарӑхтарат̆, анђах пурте пуйана хирӗҫ тухма хӑраҫҫӗ—турӑ сиртӗр унпа ҫыхланасран, тем кӑтартӗ тата тӗк тӑвӑ ҫӗртенех, тесе тӑраҫҫӗ хӑшӗ-хӑшӗ.

Пуйан Мирун Кӗпӗрйана ҫапат̆ те ҫапат̆. Ҫынсем пӑхса тӑнине кура хӑйӗн шайккинђисене хӗнеме ђӗнет. Лешсем те Кӗпӗрйана ҫавӑрса иле пуҫларӗҫ. Анђах ҫав вӑхӑтрах сасартӑк ђунӗ тӳсейменнипе.

Халӑх хушшинђен Лутра Михала сиксе тухрӗ. Сиксе тухрӗ те Пуйан Мирунӑ пӗрех тӗртсе йађӗ. Мирун хӑйӗн тађка кӳмеркипе йӑванса кайрӗ. Халӑх Лутра Михала Пуйан Мируна тӗртсе йанине кура, хӑраса хытсах кайрӗ.—Йепле хӑйрӗ ку ҫав тӗрлӗ куштана тӗртсе йӑвантарма? Пурте мӗн пулӗха тесе, пӑхса ђӑраҫҫӗ.

— Своләђ!.. терӗ Лутра Михала ҫинҫе сасӑпа йетӗм ҫинђе кӗрнеклӗ пӗҫҫисене тӑратса выртакан Мирун йеннелле сивӗ куҫпа пӑхса.—Иепле санӑн ђӗлхӳ ҫаврӑнат̆ ҫак тӑлӑх ађана вӑрӑ теме? Еп хам куҫпа хам курнӑ унӑн аппӑш ађисем хура пус патӗнђи ђӗрӗкне вырса панине. Кӗлтисем те ҫавсемех—ӑна та хамах курнӑ. А, есӗр тата, ерех пиђкисем, выҫӑ карланкӑсем, терӗ Лутра Михала Сӑхӑ Ваҫлипе унӑн шайккисем ҫине пӑхса есӗр ҫак касмак вӑрӑ майлӑ пулса, Кӗпӗрйантан ӗҫесшӗним? Ех, йӑттӑсем, намӑса пӗлӗр пӑртак таса ҫынна вӑрӑ теме...

Халӑх пӗр ђӑнмасӗр ђӑр пӑхса тӗлӗнсе тӑрат̆.

Пуйан Мируна та кӗ мен ҫӗртен Михала сиксе тухса тӗртсе йӑвантарса йани пигӗ тӗлӗнтерђӗ. Йепле пулђӗха ку?—Мируна халиђђен никам пӳрнепе тӗртмен, ӑна пурте Мирун Иванђӑ, Мирун Иванђӑ, тетђӗҫ. ак, хаљ кӗтмен ҫӗртен пӗр кӗлмӗҫ Михала тӗртсе йӑвантарђӗ. Мирун, месерле кайса ӳкнӗскер, ӳпне ҫаврӑнса тӑват уран тӑђӗ Михала ҫине кашкӑр пек пӑхат̆ Хӗп хӗрлӗ хӗрелсе кайнӑ куҫӗсем сиксе тухас пек йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ. Тата пӑртак ҫӗкленђӗ Ивӗ ђӑмӑрне темскер пек ҫатӑртаттарса ђӑмӑртарӗ. Карланкинђе темскер хӑрлата пуҫларӗ.

— Е-е е, есӗ-и?.. есӗ-и? есӗ-и мана касмак вӑрӑ текенни?

Михала «кашкӑр» йенне ҫаврӑнса тӑђӗ.

— Ну, терӗҫ халӑхсем хӑйсен ӑшӗнђе, мӗн те пулсан пулат̆ кунта, терӗҫ.

Ђӑвах та Пуйан Мирун, есӗ и, тесе хуллен кушак пек йӑпшӑнса пыђӗ те Михала ҫине пӗрех сикрӗ. анђах Михала Мируна калле кӑкӑрӗнђен кӑнклаттарса тӗртсе йађӗ. Ҫав вӑхӑтрах Мирун тепре сикрӗ те Михалана ҫавӑрса илђӗ. Ак хайхи халӑх кӗтсе тӑни тинех ҫитрӗ. Пуйан Мирун йӑлтах урса кайрӗ. Ҫав вӑхӑтрах Михалана «карланкӑсем» те йарса илђӗҫ.

— А, вӑрӑ хутне кӗме и? вӑрра хатарми?... Михалана тӗпӗртеттереҫҫӗ кӑва. Мӗскӗнӗ аран аран вӗҫӗрӗнсе тарђӗ. Урса кайнӑ куштансем Кӗпӗрйана тулама тытӑнтӗҫ.

Пӑхса тӑракан халӑх килелле шӑва пуҫларӗ.—Тем курса тӑрӑн варасгаранах—курман илтмен сывӑ пултӑр. Хӑй шайккипе анђах йулђӗ. Кӗпӗрйан анкартине Пуйан Мирун.

Хаљ тем тусан та ӗнтӗ хӑйсен ирӗк!

* * *

Ҫуллахи вӑрӑм кун кас йеннелле сулӑнђӗ. Тӑван сем хурӑнташсем, праҫнӑк йађӗпе, пӗр-пӗрин патне пуҫтарӑна пуҫларӗҫ. Вӑрӑ тытса хумханнӑ йал лӑплана пуҫларӗ. Урамсенђе ађапӑђасем хӑйсен вӑййине выљаҫҫӗ. Тӗлӗ-тӗлӗпе хапха умне ҫамрӑксем пуҫтарӑна-пуҫтарӑна лара пуҫларӗҫ. Йар уҫса пӑрахнӑ ђӳређесенђен хӑнасем шавласа калаҫни илтӗне пуҫларӗ

Ђиркӳ праҫнӑкӗ йал ҫине хӑй сӑнне ӳкерђӗ.

Пуйан Мирун килӗнђе те ӗҫкӗ хӗрсе ҫитет. Мирун пайан те ҫухалнӑ ҫӗмелне тупнӑшӑн, те тата хӑйӗн йал ҫинђи хӑватне ђаплӑн кӑтартнӑ майпа—пиҫӗ савӑнаҫлӑ Паҫӑр ҫиллипе сиксе тухас пек выђаса тӑракан ҫап ҫаврашка куҫӗсем тађка пиг ҫӑмартисем ҫинђе ҫуллӑн йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ Ҫемҫӑ, мӑнтӑр аллисемпе хӑй пӗрмайах сухалне йакатат̆. Хӑнисемпе тем тӗрлӗ ҫемҫе калаҫат̆.

— Ну Мирун Иванţă, шар кăтартрĕ сана пайан Кĕпĕрйан тесĕ хăнисем.

— Ей Кĕпĕрйан шар кăтартнипе, тет Мирун çăмăллăн ... мана мар, хăйне хăй шар кăтартрĕ. Тав т... урра—турă панипе Кĕпĕрйан ваţţи те пур ... мана ... Е ... ийĕр, хăнасем, тет Мирун. Хăй ţет ĕ ţĕ х ... тытнă çуттине, ţей куркипе ĕçтерсе çÿре ... Х ... сем ... пайк та йанк йараççĕ ерехе.

Ĕ ... ен ĕ ... ына май. Мирун кутник çинţе хĕ ĕ ... акан Сахă Васçине курах кайрĕ.

— Ес ... ма, Васçа, ... ирт ... ерех иртмесĕн, ирт, ирт маларах

— Кунта та йурĕ а ... пире

Мирун Васçара умлă хыçлă виç ţей курки тыттарţĕ Ĕçме ... ĕнĕ май Васçа алливе ţăмăртарĕ те, куçне хĕ...се тулал а тухма хушрĕ.

— Васçа, хăна лашисене кайса апат парха.

Васçа пÿртрен тухрĕ. Ун хыçĕнţен Мирун та майĕпен шу ĕ.

— Ну, мĕнле, Васçа? тесе ыйтрĕ Мирун Васçана тĕттĕм ... упа ... ĕ ţ... шыраса тупса.

— Мирун Иванţă, халăхсем тата ĕçкĕ ыйтаççĕ, тет Сахă.

— Сурăхĕсене ĕçсе йатăрам?

— Па...рах... лашине сутас терĕ; те,—илекен çук, тет Васа.

— Ме еппин тата 3 тенкĕ; асту, Васçа, лайăхрах ĕçтер

Мирун Васçана висĕ кĕмĕл кăларса тыттарţĕ Васçа кайма тытăнţĕ, анţах Мирун хулпуççинţен кăшт тытрĕ.

— Ан кайха, Васçа.

—Мĕн тата?

Мирун Васçа хăлхине хăйĕн çăварĕ патнех илсе пыţĕ.

— Каланă сăмаха ан ман—пайанхи пек аван кун урăх тупас çук ... терĕ шăппăн.

Сахă мĕнле сăмахне ţасах сисрĕ. Мирун Васçана Кĕпĕрйан суртне вут тĕртме хушать Ун çинţен вĕсем прасне... умĕнех килĕшнĕ Кĕпĕрйана çунгарса йарсан, Пуйан Мируна ун вырăнне йăшăнма нимех те мар, мĕншĕн тесен Кĕпĕрйанăн çурт йĕр çаварасси пулатинпулмасти халĕ ţасах. Унţен Мирун, Сахă Васçи пек карма çăварсене ĕçтерсе, халăхран ыйтса Кĕпĕрйан вырăнне çаварса илме те пултарать. Пĕр вырăн илсен вара Пуйан Мирун ĕмĕтленекен трахтир пулса та ларţĕ. Вот йепле тăваççĕ ăна! Кĕпĕрйана вăрă тăвас шухăш та Пуйан Мирун пуçне çак сăлтавпа анţах кĕţĕ пайан. Вăрă тытсан халăх вăоăран ĕçет, ÿсĕрĕлет. Халăх паки ţеккине пĕлмесĕр çсе ÿсĕрĕлсен, вут тухсан та никам та тĕртĕ тесе катас çук пурте ÿсĕрпе пулнă, теççĕ.

— Ну?. терĕ Пуйан Мирун Сахă ţĕнмесĕр тăнине кура, сăмаха тытайратна, Васçа?..

Сахă ţĕнмест.

— Ну?.

— Йурĕ, Мирун Иванţă, — ăна хамăр пĕлĕпĕр мĕнле тумаллине....

Сахă Васçи хăй ĕçне тума уттарţĕ.

* * *

Кĕпĕрйан килĕнţе тем тĕрлĕ ĕçкĕ пырать. Халăхсем хăшĕ ţеркке ... хăшĕ куркапа сăра, ерех ĕçеççĕ. Кĕпĕрйанăн висĕ сурăхне сутса пĕр самантрах ĕçсе йаţĕç.

— Тата мĕнне сутас? тесе кăшкăраççĕ.

— Лашине сутас! тесе кăшкăраççĕ.

Анţах лашине илекен пулмарĕ. Мĕн тăвас? — ĕçес килет Нÿхрепинţен, кĕлетĕнţен катка-пиţкесем çĕклесе тухрĕç

Кам ил...? Аллăшар пус — хуть те хăшне ил!

Сутса йараççĕ. Татах ĕçеççĕ. Татах ураççĕ.

* * *

Хĕвесе çĕмĕрсе пĕтернĕ Кĕпĕрйан халăхсем анкартинţен тасалса пĕтсен те темĕнţен ăнсăр пулса выртрĕ. Пиţĕ кусĕсем хăйĕн вăн кăвак кăвакарса кайнă, пăкма та хăрушă. Кăкăрĕнţе йун кĕвĕлсе ларнă пирки сывланă май хăр хăр тусa тăрать. Выртсан выртсан тата вăрăмăн сывласа йарать.

Çуллахи хĕвел майĕпен шăва шăвах лупас хыçне пытанса ларţĕ Кĕпĕрйана айалтан сиьĕ ça а пуçларĕ. Лупас мĕлки те шăва шăва Кĕпĕрйан урлă касса кайрĕ. Сулхăн ÿксен Кĕпĕрйан пăртак тăна кĕнĕ пек пулţĕ. Куçне уçса пăхрĕ.

Куç хунаххисем икерţĕ пек шыçăнса кайнă, туртăнса тăраççĕ.

Пĕрмай пуçран çапнипе пуç ţашки тем пек ыратать.

— Ах. тесе вăрă ăн сыв аса йаţĕ.

— Пăрахса кайнă.. Пĕţĕвех хăварнă... Ей турă, мĕншĕн çав тĕрлĕ çын мăшкăлĕ пулăмши, тесе аţа пек уласа йĕрсе йаţĕ.—Ма пĕреххутţен вĕлерсех пăрахмарĕçши?...

Тĕттĕмлене пуçларĕ Йал хушшинţе аţа-пăţасем, хĕрсем, каţţăсем шуйăхви илтĕнет. Йал вĕçĕнţе, турикасра, хут купăс вăйăклатать. Кÿршĕре хăвасем йурлани йанах илтĕнет. Кĕпĕрйан карташĕнţе ÿсĕр çынсем, карма çăварсем шавлани илтĕнет.

— Сутас лашине! тесе кăшкăрать пĕри Сутас!...

— Пĕтерес ĕнтĕ, пĕтĕмпех сутса ĕçсе йараççĕ автăхнă карланкăсем, тесе шухăшласа выртать Кĕпĕрйан.

Сивĕ пула пуçларĕ. Шыçса кайнă çан-çурăм синĕве кăлт-калт туртăнкала пуçларĕ. Кĕпĕрйан тăват уран упалевсе пырса кĕлтесем хушшине кĕрсе выртрĕ.

Лупас хыçне такам майĕпен йăпшăнса тухрĕ Тухрĕ те, нисçта кайма аптăранă пек, ţаранса тăţĕ. Кĕпĕрйан, палла тесе. тинкерсе пăхать, анţах тĕттĕм çĕрте, шыçăнса кайнă куçĕсене тем пек ţармаклаcан та, палласа илме хĕн

— Анне! терĕ Кĕпĕрйан майĕ е.

Çын мĕлки, темле сасă илтĕнĕрен, пĕшкĕнсе ларţĕ. Итлет.

— Анне мар ку, кам та пулсан урăххи тухрĕ пулмалла, тесе шухăшлать Кĕпĕрйан.

Мĕлке ларсан-ларсан каллех тăţĕ. Тата пăртак итлесе тăţĕ те, сылтăмалла пăрăнса çухалţĕ Кĕпĕрйан тем пек тинкерсе пăхса йу ţĕ.

Нумайах та тăмарĕ мĕлке çухалнă тĕле лупас арки айĕнţе вут çути, ţалт ţалт, турĕ. Кĕпĕрйан ţĕри лаштах çурăлса кайрĕ

— Пĕ ерет шуйттан... çунтарса йарасшăн... Распуй!!! Кăраул!!! Çунтарса йараççĕ!!. тесе кăшкăрса йаţĕ Кĕпĕрйан ыратнине мĕне пĕлмесĕрех сиксе тăрса.

Анţах çав вăхăтрах çип-çинçе вут çутти лупас арки айĕнţен çĕлен пек йарлатгарса лупас тăрне хă арса кайрĕ. Кĕпĕрйан вут йенне ţупрĕ, анţах хăравипе ураисем тăллавă пек ыгса ларţĕç те, кукленсе ларţĕ. Лупас йенţен çын кĕлет... уйрăлţĕ те Кĕ ĕ...ан сывăхĕнţевех çа...ра çил пек вĕçтерсе иртсе кайрĕ.

Кĕпĕрйан Сахă Васçине лайăхах палларĕ.

Карташĕнţен ÿсĕр çынсем ţупса тухрĕç. Уяталла кунталла пăхаççĕ — ним тытса сÿнтерме çук. Вут шатăртатса типсе кайнă лупас çиьĕнţи улăма капах хыпса илţĕ.

— Пушар!!.. Пушар!... тесе кӑшкӑра пуҫларӗҫ йал хушшинђе ђиркӳ тӑрӑвђе ђан кӗрлеме тытӑнђӗ.

* * *

Пӗлӗм Мӑн Кушил Кӗпӗрйанӑн шатӑртатса ҫунакан кивӗ хуралђӗ йенне ђупат̆; пӗлӗм Мӑн Кушиле килнӗ хӑна кӗреке кутӗнђен тухса урам тӑрӑх пушар сӳнтерме вӗҫтерет.

— Кам тӗртнӗ?...

— Кам пултӑр, кам Кӗпӗрйан сурӑхӗсене сутса ӗҫнӗ—ҫав тӗртнӗ: ӳсӗрпе пулнӑ ку ӗҫ, ӳсӗрпе, тесе кӑшкӑрат̆ пӗри.

— Тытас вӗсене, тытас! теҫҫӗ ыттисем.

Анђах ҫав вӑхӑтрах Пуйан Мирун ђупса ҫитрӗ. Хӑй лаша пек хашкат̆. Ҫитрӗ те, халӑх ҫине кӑшкӑрса пӑрахрӗ:

— Кӗпӗрйан тӗртнӗ, Кӗпӗрйан... хӑйне хӑй ҫиллине шӑнараймасӑр тӗртнӗ вӑл, терӗ.

Халӑх пӗр вӑхӑта шӑпах пулђӗ. Кӗпӗрйана айӑплани никам кӑмӑлне те каймарӗ. Сурат Хветӗрӗ Мирун умне сиксе тухрӗ.

— Ӑҫтан хӑйне хӑй тӗрттӗр Кӗпӗрйан, халӑхӑн пуҫне ҫаврасшӑн есӗ, Мирун Иванђђӑ; йе санӑн кӗлтӳне вӑрланӑ тесе есӗ ӑна вутта пӑрахтарса ҫунтарса йарасшӑн-и тата? ҫитӗ сана тӑлӑх ађана амантса пӗтернӗшӗн те, терӗ.

— Кӗлтине те Кӗпӗрйан вӑрламан, Кӗпӗрйанӑн ӑҫтан шинлӑ урапа пултӑр, тет тепри.

— Улталат̆ вӑл халӑха, улталат̆. Пӗтересщӗн вӑл пирӗн пеккисене, хӑй анђах пурӑнасшӑн вӑл йалта куштан пуйан... теме ытӑнђӗҫ халӑхсем те.

— Ан кайӑр пуйансем хыҫҫӑн—пӗтереҫҫӗ вӗсем пире пӗрерӗн пӗреренех, тесе кӑшкӑра пуҫларӗҫ ҫынсем.

Пуйан Мирун ђасах пӑрӑнђӗ—кунта тӑрса усси ҫук, тӑвас тенӗ ӗҫ пулнӑ—мӗн кирлӗ тата. Килне ҫитрӗ те кӗтесри Микула турӑ умне ђӗркуҫланса ларсах савӑннипе тав тума пуҫларӗ.

— Спаҫҫипӑ, ырӑ туррӑм, пӑрахмарӑн, ӗмӗтленнӗ ӗмӗте патӑн. Кӗпӗрйан вырӑнӗ тасалђӗ, хађ ӗнтӗ хамӑн ӗҫ—трахтир пулат̆ех. Тавта пуҫ, туррӑм, тавта пуҫ...

Пуйан Мирун ӳке-ӳке пуҫҫапат̆. Ђӳт еђерен пушар ҫутти Мирун пӳртне ҫап ҫутах кӗрет. Мирун тӑлӑх ађана пӗтерме пулӑшнӑшӑн турра тав тават̆....

Пушар кайланнӑҫем вӑйланса пырат̆. Кивӗ хурал тем тӗрлӗ ҫатӑртатса ҫунат̆. Хӑрушӑ, тем тӑршшӗллӗ ҫулӑм тапхӑрӑн-тапхӑрӑн, тискер кайӑк пек, Кӗпӗрйанӑн ашшӗнђен йулат кн йулнӑ хуралтне тулат̆.

Кивӗ, хӑрӑннӑ хурал вумайах ђӑтса тӑраймарӗ—ђасах ҫунса пӗтрӗ. Йал ҫыннисем, хӑнана килнӗ йут йалсем пушар патӗнђен пӗрерӗн пӗрерӗн салана пуҫларӗҫ. Йулашкинђен, амаланса выртакан пӳрт пӗрени таттисем йӑлт йалт туса илђӗҫ те, сӳнђӗҫ. Халӑх та киленле уттарђӗ. Пӗр ик сехет хушшинђе тап-таса тасалса йулнӑ ҫурт вырӑнђе пӗр Кӗпӗрйанпа амӑшӗ анђах уласа, макӑрса йулђӗҫ.

* * *

Тепӗр кунне ирхине Лутра Михала, те ӗнер ӑна ҫапкаласа илнипе тарӑхса, те тата урӑх йӑвӑр шухӑшпа ҫывӑраймасӑр, ирех тӑђӗ Пуҫри шухӑш канӗҫ паманнипе аптӑраса, Михала, пӗреххутђен, ҫуртри пуссинђи хуратул анине кайса пӑхас терӗ.

Мӑн-Кушилӗн кӑҫалхи ҫуртри пусси Сехре ҫырмине пуҫӑн. Ҫӳреме кансӗр, ҫитменнине тата Сӑрнел йалӗ йенђен ҫаврӑнса каймалла, мӗншӗн тесен, Сехре ҫырми, ҫуллен ишӗле-ишӗле хӑпарса, ҫуртри пуссине йӑлтах Сӑрнел йенелле татса хӑвара пуҫларӗ.

Лутра Михала хуратул ани тӑрӑх айалалла анат̆. Хуратулӗ кашласа ларат̆, кӑҫал атӑ тӑхӑнтармаллах пулнӑ.

Ани вӗҫне ҫитрӗ. Ани вӗҫӗнђе Сехре ҫырми сарӑлса вырт̆ат̆. Михала ҫырмана шыв ӗҫме анђӗ. Ҫырма тӗпӗнђе тап таса шыв шӑкӑртатса йухса вырт̆ат̆. Михала тӑранићђен пӗр кана ӳпне выртса ӗҫрӗ те, ҫырма тӑрӑх ҫӳлелле уттарђӗ. Иртӗлекен ҫӗре ҫитсе пырат̆. Пахат̆ шӑп ҫырма пуҫӗнђе, айалта ҫурхи шывпа шуса аннӑ сӗтел пек лаптӑк ҫерем ҫинђе сап сарӑ ырӑш кӗлтисем выртаҫҫӗ.

— Ку мӗнле кӗлтесем?...

Лутра Михала кӗлтесем патнех пыђӗ. Ҫырма тӗпӗнђе пӗр урапана йахӑн ырӑш кӗлтисем сапаланса выртаҫҫӗ—ахӑртне ҫӳлтен, ҫырма хӗррӗнђен, сирпӗтнӗ пулмалла. Кӗлтисене пурне те тӑррисене каса-каса илнӗ.

— Ак, хайхи! терӗ Лутра Михала, ак, хайхи Пуйан Мирун ҫӗмелӗ!..

Михала ҫырма хӗррине хӑпарса пӑхат̆. Анасем пуҫӗнђе ырӑш пусси йенђен шинлӑ малти урапапа кукӑр макӑр кайри урапа йӗррисем расах тӑсӑлса выртаҫҫӗ.

Урапа йӗрри ырӑш пуссинђен килсе ҫырма пуҫӗнђен, кӗлтесем сапаланса выртакан тӗлтен ҫаврӑннӑ та, ҫуртри пуссинђи Сӑрнел йеннелле кайакан прућак йенне патах пӑрӑнса кайнӑ.

— Ах, шуйттан тутарӗсем, ҫавсемех вырланӑ ҫав ҫӗмеле. ҫавсемех.. Каларӑм ӗнерех ҫавсем тесе, халӑх вӗт—Кӗпӗрйан!.. Кӗпӗрйан! тет пуйансем хыҫҫӑн кайса. Ак хайхи Кӗпӗрйан тап-тасах вӗт, мӗншӗн хӗнерӗҫши ӗнтӗ ӑна, мӗншӗн ҫунтарса йађӗҫ-ши? Мӗншӗн Пуйан Мирун ӑна вӑрӑ туса хућӗши ӗнер? Мӗн ҫитмерӗши ӑна тата—ашшӗне пӗтерђӗ, ывӑлне ҫаппа ҫарамаса хӑварђӗ, тата кама ҫаратма тытӑнӗши ӗнтӗ! Ех, пирӗн пек ђухӑнсем, пӗтереҫ ӗнтӗ пире пуйансем пӗрерӗн пӗрерӗнех....

Лутра Михала пысӑк шухӑша кайрӗ. Ӑна пӗр ыйту аптӑратат̆:

— Мӗншӗн? мӗншӗн? мӗншӗн пуйансем ђухӑнсене ҫийеҫҫӗ!...

Пуҫ тӑрӑвђе кайӑк-кӗшӗксем йурлаҫҫӗ, савӑнаҫҫӗ, ҫӗрте, курӑк ӑшӗнђе, хурт-кӑпшанкӑсем йӑшӑлтатаҫҫӗ. Пуртеваскат̆, пурте ӗҫ ет, пурте хӑй пурӑнӑҫӗпе пурӑнат̆.

Пӗр Лутра Михала анђах, уй варринђе йупа пек ђарӑнса тӑрса, хӑйӗнђен хӑй

— Мӗншӗн?.. Мӗншӗн?..

тесе ответ ыйтат̆.

*ПАТМАН.*

# ВАРВАРИ.

Тăватă пайлă пйесса*).

**Михаил Феодорович Юрьева** хисеплесе
çыратăп *Фомин (Хумма Семенĕ)*

**ВЫЛЂАКАНСЕМ:**

1. Варвари — сторошихха, 25 çулсенђе, майралла тумланна ђăваш хĕрĕ, хура çӳçлĕскер, пӳллĕскер.
2. Иван Петровђ — саветушђи, тшентĕлмен, 35 çулта.
3, Иван — куђђĕр, лаккейла çын, лутраскер, хăрамасĭ-тумасĭ.
4. 1-мĕш сотрутнĕк.
5. 2-мĕшĕ.
6. 3-мĕшĕ.
7. Машшиниска.
8. Профсойус претставиттĕлĕ.
9. Пĕр ӳсĕр çын.
10. 2 проститутка.
11. Çлетăваттĕл.
12. Хĕрарăм пайĕн претставиттĕлĕ.
13. Павăл.
14. Конвоирсем
Ĕçĕ хулара пулса иртет.

---

## Пĕрремĕш пайĕ.

Стсенă. Варвари пӳлĕмĕ. Икĕ ђӳређе. Ђӳређесем хушшинђе, çтена çумĕнђе, пĕр пĕђĕк сĕтелпе икĕ пукан. Сĕтел çинђе пĕђĕк тĕкĕр, ламппă. Çтени çинђе тĕрлĕ картăђкăсем. Вĕсене хĕрлĕ-симĕс-шура хут ленттисемпе ерешлесе пĕтерпĕ. Утиялпа витнĕ кроваĭ. Сылтăм йенне, кĕрсе çӳремелли çĕре, шаналăк пеккипе карпă.

### I.

**Варвари пĕђђен.**

Варвари *[хĕрлĕ кофтăпа, кроватђĕ çинђс папски йĕнписемпе темскер çыхса ларат, тылайтђтђен ним те шарламаст]*. Сторошиххарах иртерĕп-ши ĕмĕре... çамрăк ĕмĕре? *(Ура çине тăрса)*. Мĕн шухăш пур-ши ку пирĕн саветушђин? Ђиперех çыпăçаĭ мана. — Йурататăп, тет. — Варвари, тет кашни утаммах. *(Кулкалат)*. Пайан тата шалу хушса пађĕ. *(Тĕкĕр умне пырса йусанкалат, йурласа йарат)*.

Тирейресђĕ алçыххи, —
Ђăпарлама шарçа çук.
Килейресђĕ улахха, —
Ђунăм савни кунта çук.
Ђунăм савни Самарта,
Çав Самара кайакан
Сарра кайтăр сакăр çул!
Тăрайми вырттăр тăхăр çул!

*(Тулта алăка шаккаççĕ. Варвари пӳлĕмне карпине сирсе уçма тухат)*.

### II.

**Варвари, Иван.**

Иван *(атăпа, аллинђе хаçатпа тђăркапă йапала пур)*. Ха-а, пĕђђенех çĕмĕрттеретĕн-çке, Варвари! Епĕ, пĕр-пĕр йулташпа лараĭ тесе, итлесе тăтăм та, йут çын сасси илтĕнмерĕ. Кĕрес, терĕм вара. Йатламастăн пулĕ?

Варвари *(кулкаласа)*. Йатлатăп. Мĕншĕн йурлама ђартăн мана?

Иван. Пĕђђен йурлаççĕ-и ăна? Иккĕн йурлăпăр.

Варвари. Пĕђђен пушшех лайăх. Пĕђђен йурлама вĕренпĕ епĕ.

Иван. Ђĕнес пулаĭ...

Варвари. Кама ђĕнес? Сана-и? Есĕ ахаљ те килетĕн.

Иван. Мана мар. Мана пăхатăн-и вара есĕ? Сахал-и кађђăсем... Кăлавалерсем!.. Ах, астуман та: сана çакна пама хушрĕ. — Варварине хăйне пар, терĕ.

Варвари. Кам?

Иван. Иван Петровђ, хамăрăн саветушђи. Куђђенеç пулĕ. *(Хаçатпа тђăркапине Варварипе парат)*.

Варвари. Мĕн?.. Мĕн терĕн есĕ?

Иван. *(Кулса илсе)*. Çук, ахаљ епĕ... Пĕлместĕп, Варвари! Кайран салатса пăхмалли, терĕ хăй.

Варвари. Мĕнле кайран? *(Хĕрелсе кайса сăмах тђĕнмесĕр тăрат, антђах çавăнтах, тђăркапине тђӳређе умнелле хурат те, ăна-кăна маннă пек пулат)*. Лар, Иван, пукан çине! Мĕншĕн лармастăн? *(Иван пукан çине, Варвари кроваĭ çине лараççĕ)*.

Иван. Лайăх кунта санăн, Варвари! *(Пуканне Варвари умнелле сиктерет)*.

Варвари. Мĕншĕн сиктеретĕн пуканна?

Иван. Сан паталла пырасшăн вăл.

Варвари. Ђун кĕнĕ пулĕ ăна?

Иван. Пĕлес те çук. Хаљхи саманара пукана та ђун кĕрĕ. Ђарас епппин. *(Пуканĕпе кайалла сиксе ларат)*.

Варвари. Тата сиктер. Таçта каллех тапранса кайĕ.

Иван. Тата-и? *(ĕнси хыçне хыçкаласа)*. Тата пулсан, тата пултăр епппин. *(Пуканне тĕртсе)* Аĭа, аĭа, пукан, сик, пукан! Сана йуратмасĭ Варвари.

Варвари. *(Кулса)*. Ах, мĕн хăтланатăн есĕ, Иван? Кулăшла çын есĕ. Лар ђипер.

Иван. Хушсассăн ларас. Мĕншĕн ларас мар? *(Пӳлĕм варрине ларат)*.

Варвари. Ну мĕн калатăн?

Иван. Йурласа пар çĕнĕрен. Мĕнле йурăсем йурлатăн, Варвари?

Варвари. Тĕрлĕренех, Иван. Киђемĕн туйăнаĭ те хăш ђух, йурăпа çĕр иртеретĕн. Йурăпа çывăрса кайма та лайăх.

Иван. Ха-а, çывăрма та лайăх епппин...

Варвари. Мĕн тата? Есĕ ху çывăрмасăр пурăнатăн-им?

Иван. Çук, çывăрмастăп епĕ.

Варвари. *(Папски йĕнпине хăмсарса)* Асту сана! Ан кулса лар. *(Йурласа йарат)*.

Çӳлелле пăхрăм, тĕлĕнтĕм
Кайăк хур картипе кайнинђен.
Çĕрелле пахрăм, тĕлĕнтĕм
Çĕр çырли хĕвелпе пиçнинђен.
Шухăшлатăп, куљанатăп
Çамрăк ĕмĕр хуйхăпа иртнинђен.
Иртсе пыраĭ ĕмĕрĕм
Каçхи, каçхи тĕлĕк пек.

Иван. Хурлăхла ку санăн йура.

Варвари. Хам та епĕ хурлăхла.

*) Ђăваш Теп театăрĕнђе пуçласа февралĕн 12-мĕш ђислинђе лартнă.

Иван. Кай, ан аташ. Йурла урӑххине.

Варвари. Пӗлместӗп урӑххине. (*Йурлаť*).

Акаш вӗҫет шыв тӑрӑх,
Ирӗн ӗмӗр кун тӑрӑх.

Иван. Пӑрах йурлама. Йулташ тупас пулаť сапӑн, Варвари! Ҫамрӑк ӗмӗре мӗнле арҫынсӑр ирттерен?

Варвари. Есӗ мӗн... Йевӗђӗ мар пулӗ-ҫке?

Иван. Ахађ калатӑп, Варвари! Хӑвӑншӑн калатӑп. Пӗр ватӑлсан питех пӑхмаҫҫӗ вара.

Варвари. Есӗ пӑхатӑн.

Иван. Их-х-х, епӗ... епӗ мӗн вӑл? Сан сан-пуҫупа пулаť халӗ. Сывӑрас пулмасť.

Варвари. (*Ҫыхма пӑрахса*). Мӗншӗн кулатӑн, Иван?

Иван. Хах-хах-ха-а. Ӑҫтан кулни пултӑр унта? Тӗрӗс калатӑп: хӗрарӑм арҫынсӑр пурӑнаймасť, арҫын хӗрарӑмсӑр пурнаймасť. (*Ура ҫине тӑраť*). Ну, сыв пул! (*Алӑ параť, антђах аллине илмесӗр тӑраť*).

Варвари. Сыв пул еппин.

Иван. Сыв пул.

Варвари. Сыв пул тата. Мӗншӗн йамастӑн алла?

Иван. (*Варварине тђуп тума тӑрса*). Йурататӑп сана, Варвари!

Варвари. Кай ҫава. Ав мӗншӗн тӑраť вӑл! (*Иванран хӑпӑнаť*).

Иван. Варвари! Ђанах епӗ... йурататӑп сана (*каллех тђуп тума тӑраť*).

Варвари. Кай!

Иван. Ан хӑра, ан хӑра, Варвари! Кайатӑп. Ман пек куђђӗрсене пӑхмастӑн ӗнтӗ есӗ. Шухӑшсем саветушђи ҫинђе пулӗ-ха. Иван Петровђ лайӑх ҫын вӑл пирӗн. Хитре ҫын. Хӗрарӑмсене хытӑ йурататť. Хах-хах-ха-а! (*Тухса кайаť*).

### III.

### Варвари пӗђђен.

Варвари. (*Сӗтел умнелле пырса*). Йурататӑп епӗ Ивана. Лайӑх ҫын. Ларма та лайӑх унпа... Ах, Иван Петровђ тата. Мӗн хӑтланаť ку Иван Петровђ! (*Леш тђӑркине салатса пӑхса*). Виҫӗм кунтанпа мана ҫыпӑҫа пуҫларӗ. Пӑхӑр-ха: канфет парса йанӑ. А ку мӗн тата? Тутӑр мар-и? (*Тутӑрне салатса йарса*). Тутӑр, тутӑр! Ара мӗн хӑтланаť ку? (*пӗр канфетне илсе ҫийет, хӗпӗртесе уткаласа ҫӳреť*). Ђанах. Мӗн пур-ши кунӑн ман ҫумра? Илем тесен, илем ҫук манӑн. Ҫыпӑҫмаллах ҫыпӑҫаť хӑй. Капинетне кӗмессеренех хӑй патӗнђе тӑратаť мана. Куҫран пӑхаť. Калаҫаť. Ђанах йуратаť-ши вара? Тем, ахађ хӑтланаť пулӗ. Мӑшкӑлаҫшӑн пулӗ... (*Тулти алӑка шакаҫҫӗ. Ҫаҫатри йапалисене хыпаланса тепӗр хут пуҫтарса хураť те. Варвари уҫма тухаť*).

### IV.

### Варвари, Иван, саветушђи.

Иван. Епӗ каллех килтӗм, Варвари, ан ҫилен.

Варвари. Мӗншӗн ҫиленес? Ларӑр. Акӑ пукансем (*кроваť ҫине ларать*).

Иван Петровђ. Мӗнле пурнатӑн, Варвари?

Варвари. Ҫаплах. Нађар.

Иван. Аван ҫӗмӗрттерет вӑл. Йурӑсем йурласа кана пурӑнаť. (*Кӑсйинтђен сӗтел ҫине ӗҫмелли кӑларса лартаť*).

Варвари. Ех, тур ҫырлахах! Мӗн хӑтланатӑр вара есӗр?

Иван Петровђ. Хӑратӑн-им вара пиртен? (*тӗкӗр умӗнђе йусанкалаť*).

Варвари. Хӑрамастӑп. Мӗншӗн хӑрас?

Иван. Калатӑп епӗ сана, Варвари! Йулташ тупас пулаť, тетӗп. Мӗнле тӳссе ирттеретӗн ҫамрӑк ӗмӗре? Ҫамрӑк йун выђаťех вӑл. Хайӗннех ыйтаť.

Иван Петровђ. Тӗрӗс. Иван хӗр ђӗрине пӗлекенскер.

Иван. Тӗрӗс сӑмахӑн кукри ҫук, кӑмака ҫинђен кӗрӗс! теҫҫӗ. (*Пӑнкӑ ҫанса кӑларса*). Акӑ ҫапла шапӑлт тутараҫҫӗ ана.

Варвари. Иксӗр те есӗр манран кулатӑр. Тем усал шухӑш шухӑшлатӑр.

Иван Петровђ. Йури сана асӑнса килтӗмӗр.

Иван. Тӗрӗс. Йурататӑп епӗ Варварине.

Варвари. Мӑшкӑлатӑр есӗр мана. Епӗ таратӑп апла пулсан (*кроваťђӗ ҫинђен анса тарма тӑраť*).

Иван. (*Варварине тытса тђарса*). Ара, ан ухмахлан, Варвари! пӗђӗк ађа-им есӗ? Саветушђи... Хамӑр саветушђи сан патна килђӗ. Ҫиленет тата вӑл. Ђипер хӗр пек пул есӗ нӑртак. Ара, мӗн хӑтланатӑн, Варвари?

Варвари. Кам пӗлет сире. Тен йури мӑшкӑлама килнӗ есӗр?

Иван Петровђ (*Варварине*). Пӑрах ухмахланма. Кӳр стаккансем. Улах тӑвӑпӑр.

(*Варвари тухса кайаť*).

### V.

### Иван, саветушђи.

Иван. Ӗҫ ӑнаť, Иван Петровђ!

Иван Петровђ. Ватанаť нартак.

Иван (*хуллен*). Ахађ вӑл. (*Аллине сулкаласа*). Есӗ ӗҫтер ӑна. Иван Петровђ! Кађђа илетӗп, те. Ех, пӗлес пулаť ђаваш хӗрне ҫавӑрмашкӑн. Вӑл йалан ватаннӑ пек тӑваť.

Иван Петровђ. Ӗҫ тухӗ-ши, Иван?

Иван. Тухаť, Иван Петровђ!

### VI.

### Ҫавсемех, тата Варвари.

Варвари (*стаккансемпе*). Их-х, хӑрарӑм ҫав: йӗке хӳресем ҫаплах ђупса ҫӳреҫҫӗ.

Иван. Ырра аснӑ вӗсем.

Варвари. Калӑн есӗ, Иван!

Иван Петровђ. Парахӑр йӗке хӳресене. (*Ивана*). Тултар.

Варвари (*кроваťђӗ ҫине ларса*). Епӗ ӗҫместӗп. Есӗр ӗҫӗр.

Иван. Апла йурамасť. Халӗ „равноправи“. (*Кашнинех тултараť*).

Иван Петровђ. Тыт, Варвари!

Иван. (*Хӑй стаккане шалт ӗҫсе*). Ах, тутлӑ та ку йапала. Хӗр тути манерлех калаť, хӑйамат.

Варвари. Мӗншӗн кулаť-ши ҫак пӗрмай? Пӗртте пысӑк ҫын пек мар.

Иван. Ей, ара... Ӑҫтан кулни пултӑр-ха унта, Варвари? Сысса пӑх-ха есӗ: ђанах та тутлӑ мӗн, хӑйамат.

Иван Петровђ. Иккӗн шакалаттарса ӗҫӗпӗр.

Варвари. Ӗҫместӗп епӗ.

Иван (*Варварине стаккан тыттарса*). Ан калаҫ, Варвари! Мӗн ватанса, именсе тӑмалли пур? Вырӑс хӗрӗ пек пулас пулаť. Вӗсем ним те ватанмаҫҫӗ. Пур пӗр иртет ӗмӗр. Уса курса йулас пулаť. Ҫитменне, саветушђи... Хамӑр саветушђи хисеп тӑвасшӑн.

Варвари. Апла пулӗ те (*саветушђине ӗҫсе илеҫҫӗ*).

Иван Петровђ (*хӑй тултарса*). Варвари йађӗпе тӗппишер пултӑр.

Иван. Ӑрахмат.

Варвари. Урӑх пулмасť.

Иван Петровђ. Епӗ хушатӑп ӗҫмешкӗн.

Иван. А-ха. Саветушђи хушнине тавас пулаť.

Варвари. Кӳласшӑн есӗр. (*тӗпӗнӗшер ӗҫеҫҫӗ*).

Иван (*пуканӗне кайалла пуса кайса*). Аťсемӗр! Ман пукана ђун кӗнӗ. Мана кайма вахӑт.

Варвари (*кулса илсе*). Мӗн хӑтланатӑн есӗ, Иван?

Иван. Пукана ђун кӗнӗ, тетӗп. Мана хӑвалаť вӑл.

Варвари. Лар.

Иван. Ҫук, пукан хӑвалаť мана. Виҫҫӗн ларма лайӑх мар, тет. — Иккӗн лайӑхрах, тет. Сыв пулӑр. Ђипер улах тавӑр.

(*Иванна пӗрле Варвари ӑна ӑсатма тухать*).

VII.

### Иван Петровђ пӗђђен

Иван Петровђ (*каллӗ-маллӗ хӑвӑрттӑн уткалать*) Хм! Мӗн курман вӑл Иванра? — Лар, тет ӑна. Кул. калаť ун умӗнђе. Ман ҫине пӑхасшӑн та мар. Тур. тӑнкаласа тӑраť. Ӗҫмен пек тӑваť. Хм! Апла иккенӑсатаť тата Ивана. Сторошихха мана... саветушђине пуҫҫаптарасшӑн. Сторошихха саветушђине... Ҫук, пулаймӗ санни пек. Итлеместӗн-тӗк, ђармаҫҫӗ. Тух та кай! (*Урине таиса кӑтартать*). Вон! Ђармаҫҫӗ (*ҫиленнӗ пек пулса ларать*).

VIII.

### Иван Петровђ, Варвари.

Варвари. Мӗн пулђӗ сана, Иван Петровђ?

Иван Петровђ. Ним те мар.

Варвари. Мӗншӗн ҫилентӗн?

Иван Петровђ. Ҫук, ахаљ епӗ.

Варвари. Мӗн тата?

Иван Петровђ (*хавассӑн*). Ӗҫсе пар. Вара... йурататӑп.

Варвари. Мӑшкӑласшӑн есӗ.

Иван Петровђ. Ма апла калатӑн?

Варвари. Намӑсран хӑрамастӑн-и?

Иван Петровђ. Мӗнле намӑсран?

Варвари. Есӗ саветушђи, епӗ сторошихха.

Иван Петровђ (*Варварине хӑй ҫумне пӑтђӑртса*) Пӑрах, Варвари!

Варвари. Тӗрӗс калатӑп епӗ.

Иван Петровђ. Пӑрах кирлӗ мара калаҫма. Мӗн ҫитместпӗтӗмпех ыйт манран. (*Шӑппӑн*). Шалу ӳстермелле турӑм сана.

Варвари. Пӗлетӗп.

Иван Петровђ. Тата мӗн кирлӗ?. Пӗрле пурӑнӑпӑр. Тавай пушатар.

(*Стаккансене пушатаҫҫӗ. Иван Петровђ Варварине ђун тыса илет*).

Варвари. Кай!.. Йурамасť апла.

Иван Петровђ (*ура ҫине тӑрса*). Йышӑнмастӑн, йуратмастӑн пулсан, кайатӑп епӗ. Мана йышӑнмастӑн пулсан... Епӗ сана хам кунта ӗҫлеме илтӗм. Вӑрҫмастӑп, тумастӑп сана. Шалуне ӳстеретӗп. Есӗ апла тата. Ҫаврӑнса та пӑхасшӑн мар. Йурӗ, Варвари. Кайатӑп апла пулсан. Кайатӑп.

(*Иван Петровђ тухса кайма тӑрать, анђах каймасть. Паусӑ*).

Варвари (*Иван Петровђ умнелле пырса*). Иван Петровђ! Мӑшкӑласшӑн вӗт есӗ мана? Кала: мӑшкӑласшӑн вӗт. Мӗн сторошихха ҫумне ҫыпӑҫатӑн? Урӑххи ҫук-им сан вађђи?

Иван Петровђ (*Варварине аллинђен тытса*). Йуратӑп сана, Варвари! Сапа хам илтӗм ӗҫлеме. Есӗ апла...

Варвари. Пӗлместӗп, тем тӑвасшӑн есӗ манпа.

Иван Петровђ (*Варварине хыттӑн ыталаса*). Пӑрах урлӑ сӑмахламашкӑн. Ђуп ту, Варвари! Нихҫан та пӑрахмӑп... Кађђа илетӗп сана (*Варвари Иван Петровђӑран хӑпӑнса кроватђӗ ҫине кайса ларать*). Мӗншӗн тарӑтӑн?

Варвари. Тармастӑп-ҫке.

Иван Петровђ (*Варвари умне пырса тђӑркуҫланать.*) Варвари!

Варвари. Кай!..

Иван Петровђ. Йурататӑн-и мана?

Варвари. Ху йурататӑн-и?

Иван Петровђ. Йурататӑп... есӗ?

Варвари. Йуратма пӗлместӗп епӗ.

Иван Петровђ. Ан кала апла (*ыталанса пӳҫелӗк ҫине тайӑнаҫҫӗ*).

*Ђаршав.*

## Иккӗмӗш пайӗ.

Стена. Ућрештенири аслӑ пӳлӗм. Сӗтелсем, пукансем, ҫапмалли машшин, телефон, стена ҫинђе пысӑк сехет, портретсем. Тӗпелте саветушђи пӳлӗмӗн алӑкӗ курӑнаť.

Ирхине. Ђаршав уҫӑлнӑ уҫӑлманах, сехет тӑххӑр ҫапаť.

I.

### Иван, тата тепӗр сотрутнӗк.

Сотрутнӗк. Сторошихха иртӗнсе кайнӑ пирӗн: такамсене пуҫтараť те, улахсем тӑваť. Улах пӳрђӗ-им ку ућрештени?

Иван. Ђӑнах. Саветушђине калас пулаť.

Сотрутнӗк. Калана. Пайан кӑларса йараҫҫӗ.

Иван. Йавӑр хырӑмлӑ мар-и тата вӑл? Хырӑмне хӗскелесе ҫӳрет. Пилӗкне хытӑ ҫыхса лартаť (*кантрапа хӑй пилӗкне ҫыхса кӑтартать*). Ҫапла пађӑртса хураť ҫав. Ҫапла куҫ айӑн пӑхса ҫӳрет вара. Кулас килет манӑн хӗрарӑмран.

Сотрутнӗк. Пӗлместӗп епӗ.

Иван. Саветушђи ҫине йараť, тет. Усал! Намӑса пӗлмест. Сторошиххапа ҫыхланаť пулаť вара пирӗн Иван Петровђ. Пӗр кун та тӑратас ҫук ӑна ҫаваншӑн. Таса ҫынпа варласшӑн ҫӑва хӗрӗ.

Сотрутнӗк. Ӑна-кӑна пӗлместӗп епӗ.

Иван. Ара, пӗтӗм ҫын умӗнђе ҫапла калаť, тет.

II.

### Ҫавсемех, тата Варвари.

Варвари (*тултан кӗрет, хырӑмӗ кӑшт палӑрать*). Иван! мӗншӗн мана кӑларса йараҫҫӗ?

Иван. Пӗлместӗп. Кӑлараҫҫӗ-и вара сана?

Сотрутнӗк. Варвари, мӗншӗн ућрештенире улах тӑватӑр?

Варвари. Мана саветушђи ирӗк панӑ.

Сотрутнӗк. Паман, тет, вӑл.

(*Иван айаккалла пӑрӑнать*).

Варвари. Ыйт хӑйӗнђен. Мӗн есӗ манпа ҫыхланатӑн?

Сотрутнӗк. Ыйтӑпӑр. Килтӗр ака.

Варвари. Шӑрђӑк! (*тухса кайать*).

III.

### Иван, сотрутнӗк.

**Саветушђипе машшиниска** (*ахӑлтатса кӗреҫҫӗ*)

Саветушђипе машшиниска. Аван ђупатӑр-и?

Иванпа сотрутнӗк. Пит аван (*аллӑсем тытаҫҫӗ*).

Машшиниска. Иван Петровђ! Мӗнле тӗлӗк куртӑр

кӗҫӗр? (*машинкă хушшине ларат*).

Иван Петровҫ. Ох, пит усал тӗлӗк куртăм. Тӗлӗкре ҫӗленсем сăхаҫҫӗ пек. Ни кăшкăрма, ни вăранма, ним тума ҫук.

Ыттисем пурте. У-у-у, усал тӗлӗк апла. (*Саветуҫҫи хăй кăпинетне кӗме тăрат*).

Сотрутнӗк. Иван Петровҫ! Сторошиххăна улахсем тума есӗр ирӗк паратăр-и ҫак?

Иван Петровҫ (*хӗрелсе кайса*). Мӗн?.. Ҫук, паман (*хуллен*). Ан шарлăр ун ҫинҫен .Ăна каларса йаратпăр. Тархасшăн ан шарлăр (*кăпинетне кӗрет, сотрутнӗксем ӗҫлеме тытăнаҫҫӗ*).

IV.

**Ҫавсемех, тата Варвари.**

Варвари. Иван Петровҫ килнӗ-и?

Иван. Килнӗ.

Сотрутнӗк. Саветушҫи каламан тет сана... ах, астуман та.

Варвари. Мӗн каламан?.. Суйат вăл.

Сотрутнӗк. Ҫук, ахаҫ епӗ.

Иван. (*Варварине*). Ахаҫ шарҫăкланат вăл.

Варвари (*нурне те темле ӗненмен куҫсемпе пăхса илет*). Иван Петровҫ!

V.

**Ҫавсемех, тата Иван Петровҫ** (*кăпинетӗнҫен тухат*).

Варвари (*хăйуллăн*). Иван Петровҫ, мӗншӗн мана кăларса йаратăр? Мӗншӗн, каланă ҫӗртен, каламан, тетӗр?

Иван Петровҫ (*хӗрелсе кайса*). Сотрутнӗксем ӳпкелеҫҫӗ сан ҫинӗ,—улахсем тăват, ашкăнса пурăнат, теҫҫӗ.

Варвари (*хыттăн*). Улахсем тума ху ирӗк патăнҫке. Мӗншӗн суйатăн тата есӗ хаҫ? Тата мӗнле ашкăнса пурăнтăм епӗ? Мӗнле ашкăнтăм?.. Ҫук, уншăн мар-ха есӗ, уншăн мар. Намăсран хăраса кăларса йаратăн. Пӗлетӗп, пӗлетӗп. Йавăр ҫын турăн та мана, халӗ намăс-и-ха? Халӗ вăтанатăн-и. Ех, намăс пиҫӗ ăҫта санăн? Намăс пиҫӗ ăҫта?
(*Сотрутнӗксем Варварине саветушҫи ҫинелле пăхса итлеҫҫӗ*).

Иван Петровҫ. Ҫарăп. Сута паратăп. Ҫын умӗнҫе намăс тăватăн. Халех сута паратăп.

Варвари. Ех, усал!.. Усал! Тата есӗ хăратасшăн-и мана? Татах мăшкăласшăн-и? (*Куҫҫулӗ йухса анат*). Кайатăп профсойуса, кайатăп... Пӗтӗмпех каласа паратăп. Пурте пӗлҫҫӗр сан ҫинҫен!.. усал ҫинҫен! (*вăрҫа-вăрҫа тухса кайат*).

Иван Петровҫ (*сотрутнӗксене*). Пăхăр-ха: мӗскер хăтланат вăл! Пӗтӗм ҫын умӗнҫе варласшăн мана (*сиккеле кăна тăрат*). Хм!.. Хм!.. Мӗскер каласа намăс тăват вăл? Хм!.. Хм!.. Йӗрӗнҫӗк!.. Йӗрӗнҫӗк. Свитетлӗ пулатăр есир. Халех сута паратăп ăна. Халех, халех. Сторошиххă ҫапла хăйат манпала..! Йӗрӗнҫӗк! Халех, халех паратăп.

Иван. Ара, хам курнă епӗ ăна. Йалан финанс пайӗнҫи ӗҫлекене иле-иле килеҫҫӗ кунта. Халӗ ҫын ҫине йарат тата.

Сотрутнӗк. Епӗ пӗлместӗп.

Машшинискă. Иван Петровҫ! Мӗн мăшкăлат вăл сире? Хăй апла та...

Иван Петровҫ. Хм!.. Хм! Кăларса йаратăп ăна. Халех кăларса йаратăп (*кăпинетне кӗрсе кайат*).

VI.

**Тата икӗ сотрутнӗк кӗреҫҫӗ.**

I-мӗш сотрутнӗк. Варвари таҫта ҫупсах карӗ.

2-мӗшӗ. Профсойуса кӗҫӗ вăл.

Иван. Ха-а, унта кӗҫӗ пулат ҫава.

I-мӗш сотрутнӗк. Мӗн пулнă тата?

Машшинискă. Иван Петровҫа тем те каларӗ (*машинккипе ҫапат*).

2-мӗш сотрутнӗк. Мӗн каларӗ?

3-мӗшӗ. Ыйт Ивантан (*пуҫне ҫиксе ҫырма тытăнат*).

Иван. Таҫтан хырăм тупнă та, Иван Петровҫ ҫине йарат. Ҫиперех: Иван Петровҫпа хырăм йулҫӗ, тет. Ах, хӗрарăм, хӗрарăм. Пӗтерет ку хӗрарăм ăсӗ.
(*Ытти сотрутнӗксем йăпăштăн кула-кула илеҫҫӗ*).

I-мӗш сотрутнӗк. Иван, есӗ куҫҫӗр, пӗлетӗн ӗнтӗ: Иван Петровҫ ҫӳремен-тăр ун патне?

2-мӗшӗ. Иван хураллана-им вара?

Иван. Мӗн кулатăр есир? Ухмах-им Иван Петровҫ сторошиххăна ҫыпăҫма? Тфу! Хӗрарăм курман пек...
(*саветушҫи пӳлӗмне кӗрсе кайат, сотрутнӗксем каллех вăрттăн кулкаласа илеҫҫӗ*).

VII.

**Сотрутнӗксем** (*Ивансăр*), **тата саветушҫи.**

Иван Петровҫă. (*кăпинетӗнҫен тухса сотрутнӗксене сиввӗн пăхса илет, телефонпа калаҫма тытăнат*). Тӗп стантса? Тайтте 43 (*ҫанкăртаттарат*). Ҫитăрăв йулташ? Ҫук? Ăҫта кайнă? Кунта килет-и? А-ха, йурат апла пулсан (трупкăна хурат, сотрутнӗксене). Мӗн есир кулса ларатăр? Ӗҫлес пулат.

I-мӗш сотрутнӗк. Никам та кулмаст.

2-мӗшӗ. Иван тыттарҫӗ пулӗ-ха.

3-мӗшӗ. Йалан ҫапла вăл.

Иван Петровҫ (*ҫиллӗн*). Хам илтместӗп-им епӗ? Мӗн кирлӗ марри ҫинҫен калаҫса ларатăр?.. Сиртен ыйтмаҫҫӗ.

I-мӗш сотрутнӗк. Пайан ытла хăйар есӗр, Иван Петровҫ.

Иван Петровҫ. Саветушҫи калат сире. Аҫ итлесшӗн мар?
(*Сотрутнӗксем, хăранă пек пулса, пуҫне ҫикеҫҫӗ. Иван саветушҫи кăпинетне уҫса кăмăллăн пăхса тăрат*).

VIII.

(*Ҫавсемех, тата Варварине профсойус претставителӗ кӗреҫҫӗ*).

Иван Петровҫ. Йулташ Ҫитăрăв!

Проф. прет. (*алă парса*). Мӗншӗн сторошиххăна кăларса йаратăр?
(*Сотрутнӗксем итлеҫҫӗ*).

Иван Петровҫ. Каҫ кaларăм-ҫке сана. Ҫавăн пирки... Айăпа кӗнӗшӗн. Айăпсăр никама та тивмеҫҫӗ.

Варвари. Мӗнле айăп?

Иван Петровҫ. Калама ан ҫар мана... Никамран ыйтмасăр улахсем мӗнсем тăват.

Варвари. Суйатăн.

Проф. прет. (*Варварине*). Ан пӳл есӗ.

Варвари Мӗнле пӳлес мар ăна?..

Иван Петровҫ. Ан ҫар есӗ... Пӗтӗм сотрутнӗксем кӳренеҫҫӗ ун ҫине.

I-мӗш сотрутнӗк. Епӗ местком йаҫӗпе ҫакна калатăп: Варвари ҫанах та улахсем тукалана.

Варвари. Епĕ саветшђирен ыйтнă. Вăл мана ирĕк панă.

Иван Петровђ (*хĕрелсе кайса*). Нихăçан... нихăçан та ыйтман манран.

Варвари (*хыттăн çухăрса йарса*). Ех, мĕншĕн суйатăн есĕ?.. Мĕншĕн суйатан, намăссăр-р?..

Машшиниска. Что за безобразие? (*икĕ аллине хăлхи çунатђĕсене тытса пўлĕмрен тухса тарат*).

Проф. прет. (*Варварине*). Хуллен есĕ. Ытти сотрутнĕксем мĕн калăççĕ?

Иван (*пуçне хыçкаласа.*). Ыттисем—ыттисем пултăр. Калатăп: Варвари ђанах та ашкăнса пуранчă. Епĕ ăна пĕрре йут çынпа хам тытрăм. Хам курнă мĕн хăтланнине...

Варвари. Ех, Иван, Иван! Мĕн калатăн есĕ? Епĕ сана шаннăђђĕ, лайăх çын, тесеђђĕ.

Иван. Ђăн мар-им вара?

2-мĕш сотрутнĕк. Епĕ ним те пĕлместĕп.

3-мĕшĕ. Епĕ те пĕлместĕп.

Варвари. Пĕтерĕр мана.

Проф. прет. Местком, саветушђи, аҫăр канашланса илĕпĕр (*кăпинета кĕреççĕ*).

Иван. Варвари, ан çилен, аҫа калам сана (*Варварине алăк патнелле илсе кайат*).

IX.

### Варвари, Иван, тата икĕ сотрутнĕк.

2-мĕш сотрутнĕк. Молотетс Варвари.

3-мĕшс. Ним те харамасҫ. Вăтанмасҫ,

2-мĕшĕ. (*Хыттăн*) Пирĕн ун хутне кĕрес пулаҫ. Апла вăл пурне те кăларса йарĕ.

3-мĕшĕ (*аллине сулса*). Хуна кăларса йама-и? Пăрăн айаккарах.

2-мĕшĕ. Мĕнле апла? Айăпсăрсем кăларса йараççĕ.

3-мĕшĕ. Кĕр. Кĕрес килет-тĕк (*ĕçлеççĕ*).

Иван (*алăк патĕнтђе*). Çынтан вăтан, Варвари! Ђĕлхĕне çыхас пулаҫ.

Варвари. (*Ивана çунса йарса*). Акă сана. Усал, тилĕ!.. Çынна пĕтеретĕн. Ђĕрĕллех сутатăн çынна. Намăссăр! Кай кунтан! (*хăй пўлĕмне кĕрсе çухалат*).

Иван. Варвари... Мĕншĕн есĕ мана? Епĕ ахађ каларăм (*Варвари хыççăн кĕрсе кайат*).

2-мĕш сотрутнĕк. Туртмалли пур-и сан?

3-мĕшĕ. Пур (*пирус туртаççĕ*).

2-мĕшĕ. (*саветушђи кăпинетнелле кăтартса*). Ай-ай-й, намăс!

3-мĕшĕ (*мăн сасăпа*). Да-а... (*кăпинетрисем тухаççĕ*).

X.

**Пурте** (*машшиниска машшинка хушшине ларса çапма тăрат*).

Варвари (*проф. прет. патне пырса*). Ну, мĕн турăр?

Проф. прет. Варвара Васçилйĕвна, кунтан каймаллах пулаҫ санăн.

Варвари (*хыттăн*). Мĕнле апла? Мĕншĕн кăларса йаратăр мана?.. Мĕншĕн? Мĕн ĕçпе кăларса йаратăр? (*Саветушђи претставиттĕл хыçнерех тытаннă пек тăрат*).

Проф. прет. Компенсатси илетĕн. Икĕ ернеллĕх компенсатси параççĕ.

Варвари (*пур сотрутнĕксене те пăхса илсе, хăвăртттăн, çухăрса калама тытăнат*). Епех айала йулатăп-и-ха ĕнтĕ? Епех йулатăп-и? (*Саветушђине*). Ех, намăссăр, намăссăр! Мĕн, хăтланатăн, аҫам? Мĕн тăвататăн есĕ манпала? Йăвăрлатрăн та есĕ мана, халĕ хăваласа йаратăн-и? Халĕ вăтанатăн-и? Мĕншĕн малтан вăтанмарăн есĕ?.. Мĕншĕн пытăн малтан ман пата? Епĕ сторошихха вĕт. Мĕншĕн пытăн есĕ?.. Мĕншĕн?

Иван Петровђ. Ђарăр, йулташсем, ђарăр тархасшăн (*кăпинетне кĕрсе шалт хупăнса илет*).

Машшиниска. Ну что это? (*каллех тухса кайат*).

Варвари (*кăпинет алăкĕ патне пырса аллине йунат*). Мĕншĕн пынă вăл малтан ман пата? Мĕншĕн илĕртнĕ малтан? (*Ивана*). Кала, намăссăр! Есĕ те уђ компанинђе вĕт. Кала!.. Есĕ унăн йевђи пулса çўрерĕн. Есĕ йевђи...

Иван (*хуçланкаласа*). Епĕ-и? Епĕ... епĕ нихçан та пыман сан пата... Пĕлместĕп.

Варвари. Пыман-и, пĕлместĕр-и хађ? Веç илсе килсе кăтартам сирĕн ирсĕре. Веç кăтартам (*хăй пўлĕмне çухăрса кĕрет*).

XI.

### Çавсемех (Варварисĕр), тата саветушђи (*кăпинетран тухат*).

Иван Петровђ. Йулташсем, ђарăр ăна, ђарăр... Ах, намăс, намăс!

Проф. прет, Ђаранмасҫ вăл (*сотрутнĕксене*). Калăр есĕр.

1-мĕш сотрутнĕк. Ман мĕнле ђарас ăна?

2-мĕшĕ. Тĕлĕнмелле.

3-мĕшĕ. Пирĕн мĕн ĕç?

Иван Петровђ. Пĕтĕмпех суйаҫ вăл. Ан ĕненĕр ăна... Пĕтĕмпех суйаҫ. Ан ĕненĕр.

Варвари сасси. Ех, пуçăм, пуçăм!

XII.

### Çавсемех тата Варвари (*темскерсем илсе тухат*).

Варвари. Акă курăр, ђун илекенсем! Кам йапалисем ку? Палламастăр-и?

Иван Петровђ. Ђарăр тархасшăн.

Варвари (*саветушђине*). Иван урлă тутăр патăн. Ме кайалла!..

Иван. Епĕ... епĕ ним те паман.

Иван Петровђ. Тухса кай кунтан халех.

Варвари. Пĕтерĕр мана, пĕтерĕр! (*тутăрне ывăтса йарат*].

Иван Петровђ. Ђарăр тархасшăн. Намăс тăваҫ (*Варварине*). Сута паратăп сана (*кăпинетне кĕрсе кайан пек тăват*).

Варвари. Пар, пар! Пĕтерĕр мана... Хырăм парахтар, тесе укçа патăн. Ил кайалла (*укçине саласа тăкат*). Кайатăп, хамах тухса кайатăп. Пĕтерĕр мана, есĕр вайлă вĕт (*йĕрет*).

Проф. прет. Ма йĕретĕн? Компенсатси параççĕ сана. Тата урăх вырăна кĕме пултаратăн (*алă тытса тухса кайат*).

Варвари. Çапла хута кĕретĕр есĕр! Ђăннипе пĕлмесĕрех путаратăр çынна. Ăçта кайас манăн? Ăçта кайас халĕ?.. Ӳте сутма урама тухса кайас-и манăн? Ӳте сутса тăранса пурăнас-и? Ех, пуçăм, пуçăм!.. (*хыттăн уласа пўлĕмне кĕрет: сотрутнĕксем кулса йараççĕ*).

*Ђаршав.*

### Виççĕмĕш пайĕ.

Стсена. Хула пахђи. Сукмак. Лармаллисем. Çĕрле.

I.

Пĕлĕтсем хушшинђен уйăх тĕксĕмĕн çутатаҫ. Хыçалта мусăк калаççĕ. Анђах, нумай та иртмест, мусăк калани ђаранаҫ.

Катара йытă вĕрсе илет.

II.

**Варвари пӗҫҫен.**

Варвари. Ака кӑтартаҫ... кӑтартаҫ пурнӑҫ. Ӑҫта кайас ӗнтӗ халӗ? Килтисем йышӑнмарӗҫ. Варҫса йаҫӗҫ. Курва, аскан йатне илтрӗм. Ех, ех!.. Ҫаплах пӗтӗп-ши вара? Ҫаплах-ши... *(айаккалла пӑхать).* Килеҫҫӗ. Усал кулса ҫӳрет тата *(шалалла пӑрӑнса йӑвӑҫ хыҫне пытанать).*

III.

**Саветушҫипе машшиниска** *(кулкаласа сукмакпала йеринен пыраҫҫӗ).*

Иван Петровҫ. Лайӑх ҫӗрле ҫӳреме.

Машшиниска. Ой, шутсӑр лайӑх, Иван Петровҫ! Сывлӑш уҫӑ. Тутлӑ сывлӑш.

Иван Петровҫ. Аҭа ларар.

Машшиниска. Ларар. *(Пӗр-пӗрне кулайсенҫен пытса лараҫҫӗ).*

Иван Петровҫ. Ҫисе пӑх, Лиса! *(канфет парать. Варвари вӑртӑн пӑхса илет).*

Машшиниска. Мерҫҫи, Иван Петровҫ. Кала мӗн те пулин.

Иван Петровҫ. Мӗн калас? Йурататӑп сана, Лиса!

Машшиниска. Суйӑмастӑн-ши пӑртак?

Иван Петровҫ. Ака уйӑх пур. Уйӑхпа тупа тӑватӑп.

Машшиниска. Уйӑх ҫук. Пӗлӗт хушшинҫе вӑл. Ака суйи куранҫӗ те санан. Ака тытрӑм та сана.

Иван Петровҫ. Лиса! Ӗнен мана. Сана епӗ пӗр йапала парасшӑн *(хутпа ҫӑркаппине сӑлтать).*

Машшиниска. Мӗн?

Иван Петровҫ. Ылтӑн ҫӗрӗ. Йури сан валли илтӗм

Машшиниска *(ҫӗррине пӳрнине тӑхӑнтарса).* Мана шӑпах йураҫ.

Иван Петровҫ. Ӗненетӗн-и халӗ?

Машшиниска. Йурӗ-ҫке. Урахҳи ҫинҫен сӑмахлӑпӑр. Кала лешне, Иван Петровҫ! Тахҫанах: калатӑп, терӗн. Халӗ те каламарӑн. Мӗн пулнӑ вара сирӗн?

Иван Петровҫ. Пӑрах ӑна, Лиса! Ним те пулман. Хӑй ҫавӑн пек хӗр вӑл. Ухмахла хӗр.

Машшиниска. Мӗншӗн сан ҫине йараҫ-ха вӑл тата?

Иван Петровҫ. Кӑларса йанӑшӑн. Ним тӑвайманрӑн. Ухмах вӑл. Ӑна сута пана епӗ.

Машшиниска. Ҫапах хӗрхенетӗп епӗ ӑна. Халӗ ӑҫта вӑл?

Иван Петровҫ. Пӗлместӗп... Кай, пӑрах уп ҫинҫен!

Варвари сасси. Сысна!

Машшиниска. Ай!

Иван Петровҫ. Мӗн? *(йытӑ вӗрет).*

Машшиниска. Сын пур кунта, илтмерӗни?

Иван Петровҫ. Ҫук-тар. Йытӑ сасси вӑл.

Машшиниска. Аҭа, кайӑпӑр.

Иван Петровҫ. Лар пӑртак. Кайӑпӑр-ха.

Варвари сасси. Ҫун илекен.

Машшиниска. Ав, илтрӗн-и?

Иван Петровҫ. Ҫанахах та *(кӑшкӑрать).* Ей, кам унта?

IV.

**Ҫавсемех, тата Варвари** *(йӑвӑҫ хыҫӗнҫен тухать).*

Варвари. *(Лисӑ умне пырса).* Лиса, Лиса! Пӑрах ку ҫынна. Пӑрах усала. Ырӑ ҫын пул. Ӗнен мана, ӗнен. Мана пӗтерҫӗ вӑл. Сана та пӗтерет. Асту: сана та пӗтерет. Мана та ҫаплах илӗртрӗ малтан: канфетсем паҫӗ, тутӑр паҫӗ, укҫа паҫӗ. Сана та ҫаплах илӗртет. Пӑхса тӑтӑм епӗ: канфет паҫӗ сана, ылтӑн ҫӗрӗ паҫӗ. Улталаҫ вӑл сана. Улталаҫ...

Иван Петровҫ *(Варварине).* Кай кунтан.

Машшиниска. Ан ҫар. Калатӑр. *(Виҫҫӗшӗ те пӗр-пӗрпинҫен уйрӑмрах тӑраҫҫӗ).*

Варвари. Ӑна йуратни кирлӗ мар.—Йуратап. тесе ахаҫ лапартатаҫ вӑл. Ӑна машкӑлани кирлӗ. Хӑйӗн аскӑн шухӑшне кантармашкӑн анҫах шыраса ҫӳрет вӑл. Ҫавӑншӑн анҫах ӑна хӗрарӑм кирлӗ. Тар усалтан. Тархаслатӑп епӗ: тар айаккарах... Вӑл мана пӗтерҫӗ. Вӑл мана илӗртрӗ.—Йурататӑп, терӗ малтан. Улталарӗ. Йавӑр ҫын турӗ мана. Намасран хӑрапипе, вырӑнтан кӑларса йаҫӗ йулашкинҫен. Ун пирки хырӑм пӑрахрӑм. Ун пирки ҫутах вилсе кайаттӑм. Ҫун илекен вӑл! Ҫӗрӗллех ман ҫуна илҫӗ. Ун ырлӑхпе епӗ кунта ҫӳретӗп халӗ. Нисҫа та йышӑнмаҫҫӗ мана. Килтисем йышӑнмаҫҫӗ. Ҫынсем кулаҫҫӗ манран. Пурте тарахлама пахаҫҫӗ. Ҫӑннипе каласан, никам та ӗненесшӗн мар. Никам та йышӑнмасҭ. Пӗтерҫӗ мана. Ӑсла пулсан, сыхлан, аҫам! Тар ҫак усалтан. Тар айаккарах. *(Иван Петровҫ патне пырса).* Ҭфу, сысна, сысна! Пусна пултар сана. Епӗ ылханни, епӗ макӑрни ҫиттӗр сана! *(шалалла кӗрсе ҫухалать).*

V.

**Иван Петровҫпа машшиниска.**

Иван Петровҫ. Ухмах вӑл. Есӗ ӗнентӗн-им ӑна?

Машшиниска *(пӳрнинҫен ҫӗрне хывса парса).* Шыра урахҳине. Мана ан машкӑла, Иван Петровҫ! *(хӑвӑрттӑн кайать).*

Иван Петровҫ. Лиса!.. Ан ухмахлан, Лиса!.. *(хыҫҫӑн ҫупать).*

VI.

Пӗлӗт уйӑха хупласах илет. Йытӑ вӗрни хыттӑн илтӗнет.

VII.

**Варвари тата ӳсӗр ҫын** *(каҭӑран илтесе тӑрать).*

Варвари. Карӗҫ. Ҫӑмӑр килет пулас. Пӗлӗтсем капланаҫҫӗ. Тӗттӗм... Пур ҫӗрте те тӗттӗм ман тӗлтен. Ех, тӗттӗм ҫӗр! Хупласа ил мана ҫасрах. Пӗрех пӗтес пулаҭ манӑн. Пӗрех... *(Аслати).* Ай!.. Аслати аватаҭ. Ӑҫта кайас? Ӑҫта хӳтлӗх пур-ши ман валли? Ӑҫта? Сикес. Шыва кайса сикес. Пӗр самант анҫах кирлӗ. Ҫампӑлт ту та, пӗтрӗ... Пӗтрӗ пурнӑҫ. Сыв пул, пурнӑҫ! Сыв пул, тӗнҫе! Никам та кулмӗ вара. Никам та машкӑламӗ сана... Ой, хӑратап. Хӑратӑп ҫапах. Хӗрарӑм ҫӗри. Ҫемҫе ҫӗре. Ҫаванпа та машкӑлаҫҫӗ ӑна. Ех, кала, ҫунӑм! Ӑҫта кайас? Ӑҫта? Харавҫӑ!.. Мӗншӗн вилес килмест-ха ҫапах? Мӗншӗн хӑратӑп? Мӗн пур саншӑн пурӑнӑҫра? Мӗн курасшӑн есӗ татах? *(Аслати).* Ай!.. Хӑратӑп. Кайас! Кайас пахҫа тавра. Кама та пулсан тӗл пулӑп... Урахла пӗтес пӗрех хут. Урахла вилес *(хыттӑн).* Сутӑнас! Кам тӗл пулаҭ—илтӗр мана. Ирӗккӗнех илтӗр. Ирӗккӗнех парӑнас. Ах, мӗн калап епӗ?..

Ӳсӗр ҫын *(Варвари умне тайкаланса пырать).* Аҭа манпа. Мӗн пахса тӑратӑн? Аҭа!

Варвари. Пымастӑп.

Ӳсӗр ҫын. Ху каларӑн-ҫке. Аҭа.

Варвари. Ҫук.

Ӳсӗр ҫын. Ну, йул еппин. Пымастӑн-тӑк—ан пыр. Урахҳине тупатпӑр. Аҭа, пыратӑн-и?

Варвари. Пымастӑп.

Ӳсӗр ҫын. Ан пыр. Урахҳине тупатпӑр. Ех-хе-ех-хе хех-хе-е-е-к! *[кайать].*

VIII.

### Варвари пĕҫҫенех.

Варвари. Ăҫта тана вăл ҫын? Курмарăм-ҫке епĕ ăна. Каларăм анҫах, сиксе те тухрĕ. Усалсем пур ҫĕрте те сыхлаҫҫĕ. *(Сехет тăнĕ иккĕ ҫапат)*

IX.

Варвари, тата икĕ проҫтитуткă *[пируссем туртса ахăрашса кĕреҫҫĕ].*

1-мĕш проҫтитуткă. *(Варварине).* Мĕнле арҫын кĕтетĕн, аҫам?

Варвари. Кĕтместĕп-ҫке.

2-мĕш проҫтитуткă. Ма таратăн тата?

1-мĕшĕ. Аŷа хамăрпа. Лайăххи тупса парапăр.

Варвари. Ăҫта?

1-мĕш проҫтитуткă. Аŷа. Тупса парăпăр сана.

2-мĕшĕ. Спасҫипа калан. Аŷа.

Варвари. Ăҫта кайатăр есĕр?

1-мĕш проҫтитуткă. Аŷа... Аŷа... Сан ваҫҫи те тупăпăр.

*(Варварине хăйсемпе пĕрле йертсе кайаҫҫĕ).*

*Ҫаршав.*

## Тăваттăмĕш пайĕ.

Стсена. Ҫлетăвăттĕл пӳлĕмĕ. Сĕтел, пукансем, телефон.

Ҫлетăвăттĕлпе хĕрарăм пайĕ претставиттĕлĕ калаҫҫĕ.

I.

### Ҫлетăвăттĕл, тата хĕрарăм пайĕ претставиттĕлĕ.

Хĕр. прет. Ҫавăн пек ку ĕҫ. Мана хĕрарăм пайĕ Варвари хутне кĕме хушса йаҫĕ.

Ҫлетăвăттĕл *[ĕҫ хутҫĕсене пăхкаласа].* Ҫапла. Сирĕн шутпа, краштанин Петров Иван Петровҫ ҫанах апла тунă Васҫилйĕвă Варварăна?

Хĕр. прет. Ҫанах. Вăл ăна ирĕксĕрленĕ. Вăл ăна елекленĕ. Айапсăрах вырăнтан кăларнă. Хĕрарăм пайĕ хушнипе, Варвари Петрова сута паҫĕ... Айăплисенҫен лайăхрах тĕпҫесе ыйтма кирлĕ.

Ҫлетăвăттĕл. Йурĕ. Тата мĕн калатăр?

Хĕр. прет. Урăх каламалли ҫук манăн.

Ҫлетăвăттĕл. Павăл!

II.

### Ҫавсемех, тата Павăл.

Павăл *(алăка уҫса).* Кама ҫĕнмелле?

Ҫлетăвăттĕл. Васҫилйĕвă Варварă кĕтĕр.

Павăл. Васҫилйĕвă Варварă!

III.

### Варвари кĕрет.

Ҫлетăвăттĕл. Хут пĕлетĕн-и есĕ?

Варвари. Пĕлместĕп.

Ҫлетăвăттĕл. Есĕ Иван Петрова айăпласа ҫырса панă.

Варвари. Ҫапла. Панă.

Ҫлетăвăттĕл. Мĕн турĕ вăл сана? Тĕплĕн каласа пар-ха.

Варвари *(Хĕр. прет. ҫинелле кăтартса).* Акă ку йулташа епĕ пĕтĕмпех каласа панă. Вăл kаларĕ пулĕ сире.

Ҫлетăвăттĕл. Есĕ ăна пĕтĕмпех тĕрĕс каларăн-и вара? Кунта тĕрĕс калас пулаŷ.

Варвари. Тĕрĕс. Пĕтĕмпех тĕрĕс.

Ҫлетăвăттĕл *(ҫырат).* Профсойус претставиттĕлĕ кĕҫĕ-и сан хута?

Варвари. Ҫук. Кĕмерĕ.

Ҫлетаваттĕл. Лар пукан ҫине. *(Телефонна тăнкăртаттарат).* Тĕп стантсă? Профсойусна ҫыпăнтарăр... Профсойус? Ҫитарав йулташа ҫлетавăттĕл камĕрне йарăр. Халех. *(Трупкăна хурат).* Васҫилйĕвă Варвара.

Варвари *(ура ҫине тăрса).* Епĕ.

Ҫлетаваттĕл. Лар, ан тăр. Кала-ха тата: Иван Петровҫа йулашки хут хăла пахҫинҫе курнă ҫух есĕ темле икĕ хĕр тĕл пулнă. Ăҫта илсе карĕҫ вĕсем сана?

Варвари. Пивнойа. Унтан епĕ ҫавăлтах тухса тартăм. Вĕсем ӳсĕр арҫынсем хушшинҫе йулҫĕҫ.

Ҫлетаваттĕл. Вара?

Варвари. Вара мана, теҫĕр кунне, пĕр ырă ҫын: хĕрарăм пайне кайса пăх, терĕ. Епĕ карăм. Унта мана прийута ĕҫлеме йаҫĕҫ.

Ҫлетăваттĕл. Унҫен ун пек хĕрсемпе ҫӳремен-и есĕ?

Варвари. Нихҫан та.

Ҫлетăваттĕл -*(хĕр. прет-не).* Алă пусăр унăн. *(Хĕр. прет. алă пусат).* Павăл!

Павăл *(алăкран).* Епĕ.

Ҫлетăваттĕл. Кала Икнатйĕва. Кĕтĕр.

IV.

### Ҫавсемех, тата Иван.

Иван. Мĕн пирки ҫĕнетĕрха мана?

Ҫлетаваттĕл. Ĕҫ пирки. Мĕн йатлă?

Иван. Иван Икнаŷйĕвиҫ.

Ҫлетаваттĕл. Мĕн ĕҫре? Миҫе ҫулта?

Иван. Вăл та кирли вара сире? Епĕ ним те туман. Ҫын вĕлермен.

Ҫлетаваттĕл. Калас пулаŷ ыйтнине хирĕҫ.

Иван. Ну ҫырăр, ҫырас килет-тĕк. Хĕрĕхре, Иван Петровҫ патĕнҫе куҫҫĕрта пурнатăп.

Ҫлетăваттĕл. Кам вăл Иван Петровҫ?

Иван. Саветушҫи. Пĕлместĕр-и вара? Ăна хулипех пĕлеҫҫĕ.

Ҫлетăваттĕл. Кунта тĕрĕс калас пулаŷ. Тĕрĕс каламасан саккун тăрăх айăплаҫҫĕ. Краштанкка Васҫилйĕва Варварă краштанин Иван Петрова сута панă. Мĕн пĕлетĕн ку ĕҫпе?

Иван. (*Варварине пăхса илсе*). Епĕ... епĕ ним те пĕлместĕп ăна.

Ҫлетăваттĕл. Васҫилйĕвăна пĕлместĕн-и?

Иван. Ăна пĕлетĕп.

Ҫлетăваттĕл. Иван Петровҫпа Варвари хушшинҫи ĕҫсене пĕлетĕн-и есĕ?

Иван. Ҫук, ҫук. Пĕлместĕп.

Ҫлетăваттĕл. Иван Петровҫ хушнипе, Варварине тутăр мĕнсем паман-и есĕ?

Иван. Мĕнле тутăр? Кай, ан аташ, йулташ!.. Астумастăп ăна-кăна. Суйа халап вăл.

Ҫлетăваттĕл. Васҫилйĕвă Варварă! Есĕ мĕн калан кун пирки?

Варвари. Тутăр паман, тесе суйаŷ вăл.

Иван. Е-е, леш-и? Астăватăп халĕ. Вăл ахаҫ тутăр. Ăна Иван Петровҫ ĕҫленĕшĕн панă.

Ҫлетăваттĕл. Ĕҫленĕшĕн тутăр параҫҫĕ-и сирĕн? Ҫапла есĕ ĕҫ мĕнлине пĕлетĕн мĕн. Пĕлнĕ ҫĕртен суйатăн.

Иван. Суймастăп.

Ҫлетӑваттӗл. Йурӗ. Тата мӗн калама пултаратӑн ку ӗҫпе?

Иван. Ара, ырӑ йулташ, урӑх мӗн калас манӑн? Урӑх пӗлместӗп.

Ҫлетӑваттӗл. Алӑ пус.

Иван. Мӗн тесе?

Ҫлетӑваттӗл. (*Хутне кӑтартса*). Ҫакӑнта каланӑ сӑмахсемшӗн саккун умӗнҫе сӑмах тытатӑп тесе.

Иван. Пусмасӑр йурамасӑ-и вара? Пусасах пулаӑ-и?

Ҫлетӑваттӗл. (*Хыттӑн*). Пусас пулаӑ... Павӑл! (*Алӑкран Павӑл пӑхать*). Петров, Иван Петровҫ кӗтӗр.

Хӗр. прет. Епӗр тухса ларма пултаратпӑр пулӗ?

Ҫлетӑваттӗл. йураӑ.

(*Варварипе хӗр. прет. тухаҫҫӗ*).

## V.

## Ҫлетӑваттӗл, Иван, саветушҫи.

Ҫлетӑваттӗл. Йат, хушамат, ҫул, вӗрӗнни?

Иван Петровҫ. Петров, Иван Петровҫ, вӑтӑр пиллӗкре, инҫтитут пӗтернӗ.

Ҫлетӑваттӗл. Сутла, ҫлетствипе айапланман?

Иван Петровҫ. Ҫук.

Ҫлетӑваттӗл. Есӗр Ваҫҫилйӗв Варварана саветушҫи пулнӑ майӗпе ирӗксӗрлесе намӑс ӗҫ тунӑшӑн, ӑна елеклесе вырӑнтан кӑларса йанӑшӑн айӑпланатӑр. Йышӑнатӑр-и ку айапсене?

Иван Петровҫ. Йышӑнмастӑп.

Ҫлетӑваттӗл. Ваҫҫилйӗвӑпа ҫывӑх пуранман-и есӗ?

Иван Петровҫ. Ҫук.

Ҫлетӑваттӗл. Ваҫҫилйӗва уҫрештенире укҫасем сапаласа йанине астумастӑн-и есӗ? Мӗншӗн те пулсан сапаласа йанине?

Иван Петровҫ. Астӑватӑп.

Ҫлетӑваттӗл. Мӗн пирки пулнӑ-ха вӑл? Укҫи камӑн пулнӑ?

Иван Петровҫ. Укҫи ман мар. Хӑй ман ҫине йараӑ.

Ҫлетӑваттӗл. Кам вӑл хӑй?

Иван Петровҫ. Ваҫҫилйӗва.

Ҫлетӑваттӗл. Варварӑ Ваҫҫилйӗва!

## VI.

## Варвари кӗрет.

Варвари. Мана ҫӗнтӗр-и?

Ҫлетӑваттӗл. Варварӑ Ваҫҫилйӗвӑ, кала-ха: есӗ сапаласа йанӑ укҫа камӑн пулнӑ?

Варвари. Иван Петровҫӑн. Вӑл мана: апорт тутар, тесе паҫӗ.

Ҫлетӑваттӗл. Краштанин Петров! Халӗ есӗр Варварӑ Ваҫҫилйӗвӑпа куҫа-куҫӑн тӑратӑр. Мӗн калатӑр вӑл калана пирки?

Иван Петровҫ. Суйаӑ вӑл. Укҫи хӑйӗн пулнӑ. Вырӑнтан кӑларса йанӑшӑн ҫиленсе вӑл йури апла хӑтланҫӗ.

Варвари. Апла мар.

Ҫлетӑваттӗл. (*Варварине*). Есӗ кирлӗ мар халӗ. (*Варвари тухса кайать*). Йураӑ. (*Иван Петровҫа*). Тата мӗн калас тетӗр?

Иван Петровҫ. Епӗ пӗтернӗ.

Ҫлетӑваттӗл. Алӑ пусӑр та, ларӑр. (*Телефонпа калаҫать*). Конвой комантипе сыпӑнтарӑр... Конвой команти-и? Виҫӗ конвоир йарӑр. (*Трупкӑна хурать*). Профсойусран ҫын килҫӗ-и?

Павӑл. (*Алӑкран*). Килнӗ.

## VII.

## Ҫавсемех, тата Ҫитӑрӑв.

Ҫлетӑваттӗл. Йаҫӗ, хушамаҫӗ, кала йӗркипе.

Ҫитӑрӑв. Ҫитӑрӑв, Кенати Ҫитӑравиҫ, 30 ҫулта, сутпа айапланман, слетствинҫе тӑман. Мӗн ӗҫпе ҫӗнтертӗр?

Ҫлетӑваттӗл. Ваҫҫилйӗва Варварана вырантан кӑларса йанӑ ҫух пулни есӗр?

Ҫитӑрӑв. Пулнӑ.

Ҫлетӑваттӗл. Калӑр: мӗнле пулнӑ ӗҫӗ?

Ҫитӑрӑв. Халӗ лайӑххӑн астӑваймастӑп.

Ҫлетӑваттӗл. Мӗнле-ха астӑваймастӑр? Ваҫҫилйӗва мӗнле сӑмахсем каларӗ ун ҫух? «Йавӑр ҫын», «апорт», «укҫа», тата ытти ҫавнашкал сӑмахсем асӑнман-и вӑл?

Ҫитӑрӑв. Асӑннӑ пулас... асӑннӑ.

Ҫлетӑваттӗл. Есӗ, профсойус претставиттелӗ, Ваҫҫилйӗва хутне кӗрес тӗлӗшпе мӗн турӑн вара?

Ҫитӑрӑв. Компенсатси памалла тунӑ.

Ҫлетӑваттӗл. Ҫавна ҫеҫ? Ваҫҫилйӗвӑна мӗншӗн вырӑнтан кӑларнине тӗпҫесе пӗлме тарӑшман-и есӗ?

Ҫитӑрӑв. Тӑрӑшнӑ. Епӗ компенсатси памалла тунӑ.

Ҫлетӑваттӗл. Вулӑр та, алӑ пусӑр.

Павӑл [*алӑкран*]. Конвоирсем килҫӗҫ.

Ҫлетӑваттӗл. Йурӗ. Хуп алӑка. (*ҫырать, пауса*).

Иван (*Ҫлетӑваттӗл умнелле пырса*). Йулташ ҫлетӑваттӗл!

Ҫлетӑваттӗл. Мӗн каласшӑн?

Иван. Ҫӑннипе калам сана: Варвари айапсӑр. Хӑтар мана ку таса мар ӗҫрен. Йулташ... ей, ырӑ йулташ! Ҫлетӑваттӗл! Халӗ ҫӑннипе калатӑп. Варварине Иван Петровҫ йури кӑларса йаҫӗ. Намӑсран хӑраса.

Ҫлетӑваттӗл. Мӗнле намӑсран?

Иван. Варварине йавӑр ҫын тунӑ вӑл. Кайран, ҫынсенҫен вӑтанса-и, ӑна кӑларса йаҫӗ. Ҫапла пулнӑ унӑн ӗҫӗ. Йулташ ҫлетӑваттӗл, хӑтар мана ку таса мар ӗҫрен.

Ҫлетӑваттӗл. Паҫӑр мӗншӗн ҫапла каламарӑн?

Иван. Паҫӑр-и?.. Паҫӑр... ахаҫ. Халӗ ҫӑн калатӑп.

Ҫлетӑваттӗл. Тутӑр, укҫа панисем те ҫӑнах пулни?

Иван. Пулнӑ. Ҫӑпах пулнӑ. Мана пама хушнӑ вӑл. Епӗ итленӗ.

Ҫлетӑваттӗл. Лар. Иван Петровҫ! Мӗн хушса калатӑр?

Иван Петровҫ. Суйаӑ. Тӗрӗс мар.

Ҫлетӑваттӗл. Ҫитӑрӑв! Есӗр пӗлместӗр-и ун ҫинҫен?

Ҫитӑрӑв. Пӗлместӗп.

Ҫлетӑваттӗл. Ларӑр (*васкаса ҫырать. Пауса*).

## Постановлени (*вулать*).

1925 ҫулта, авкустӑн 11-мӗшӗнҫе, епӗ, халӑх суҫӗн ҫлетӑваттӗлӗ Воҫнӑв, краштанин Петров Иван Петровҫран... Ук. Котӗксӑн 169а стаӑйи айӑплакан ӗҫпе, краштанин Иван Икнатйӗвпа Кенати Ҫитӑрӑвран Ук. Котӗксӑн 171 стаӑйипе айӑплакан ӗҫпе тӗпҫесе ыйтрӑм.

Айӑпӗсене кӑтартакан вӑйне кура... сутҫен ҫак ӗҫпех урӑх айӑпа кӗресрен ҫармашкӑн, тата айӑплӑ ӗҫӗсене лайӑххрах ҫутатмашкӑн, У. П. К-ӑн 146, 149 стаӑйисем тӑрӑх, краштанин Петрова—Икнаӑйӗва—Ҫитӑрӑва хурал аллине пама йышӑнатӑп... Ҫлетӑваттӗл Воҫнов (*Айӑпланаканӗсем ҫине пӑхса*). Постановлени ҫинҫен пӗлтернӗ пирки алӑ пусӑр.

(*Иван Петровҫпа Ҫитӑрӑв алӑ пырса пусаҫҫӗ*).

Иван (*пусмасăр тăрса*). Йулташ çлетăвăттĕл! Мана мĕншĕн? Епĕ ҫаннине каларăм вĕт. Ей, апла пулсан... Ара, йар мана.

Çлетăвăттĕл (*пусмалли хупне кăтартса*). Пус.

VIII.

**Виçĕ конвоир кĕреççĕ.**

Çлетăвăттĕл. Илсе кайăр çаксене.

1-мĕш конвоир. Айăр.

2-мĕшĕ. Тухăр.

Иван. Ара, мана мĕншĕн? Ак, хăйамат...

(*Конвоирсем Ивана, савтуштьине, Çитăрăва илсе тухса кайаççĕ*).

*Ҫаршав.*

Хумма Çеменĕ.

# Хĕллехи ир.

Каç шăплăхне пĕтерсе,
Автан хыттăн аватрĕ.
Йал халăхне систерсе,
Лаш ыйхăран варатрĕ.

Ҫалтăр-ҫалтăр хăй çутти
Кантăксенҫен курăнҫĕ,
Шурăм пуç кăвак çутти
Мал йенҫе кĕт палăрҫĕ.

Çула кайан лавçăсен
Хăварт йуртрĕç лашисем.
Вĕсем иртнĕ хыçĕнҫен
Вĕрсе йулҫĕç йыттисем.

Каç тĕксĕмĕ хыçĕнҫен
Йал хушшинҫен сирĕлҫĕ,
Çут çăлтăрсем тĕперен
Çӳрĕкленсе сӳнҫĕçĕ.

Хура вăрман хыçĕнҫен
Шуса тухрĕ çут хĕвел,
Анҫах, сӳрĕк сăнĕнҫен
Шартлатаť çеç сивĕ хĕл.

Хĕл сиввинҫен хăраса
Ăшă тумтир тăханса,
Урисенҫе çăм талла —
Тухрĕç хăшĕ тулалла.

Выçă выҫăх-ҫĕрлĕхне
Апат парса шăварма,
Йе палăртса ирлĕхне
Хăшĕ утрĕç шыв ăсма.

Йуманай.

# „Нарспи" автăрне асăнса.

Вăл, çурхи йур айĕнҫен
Пĕҫҫен тухнă ҫеҫек пек,
Ирхи шуçăм умĕнҫен
Хăпаракан çăлтăр пек,—
Пĕтĕм ҫаваш çĕршывне
Çурхи илем кĕреҫҫен,
Ун йалĕсем çинелле
Хĕвел çутти ӳкеҫҫен,—
Ҫуралăхри ҫĕлхене
Шанҫăк пама курăннă,
Тухас сăвăç туссене
Çул кăтартма пуçăннă

* * *

Таван ҫĕлхен сухине
Кӳлĕннĕ вăл хăйне хăй,
Ĕçин пулас уссине
Хыт ĕненсе хунă вăй.
Анҫах... ана хĕсепсĕр
Сĕмсĕр вилĕм хупларĕ;
Савах та вăл пире пĕр
Пысăк шанҫăк кăтартрĕ.

Елкер.

# ТЕЛЕЙСĔР ЂЕЂЕК.

ХАМĂН ЂĔРЕРЕН ЙУРАТНĂ ЙУЛТАША К. Н. ВАХИТОВА АСĂНСА ÇЫРАП. (1919 мĕш çулта вилнĕ).

Камăн ырă ђĕлхийĕ
Çуркуннене мухтамĕ,
Менле çыннăн ђĕрийĕ
Вăл кунсенђе савăнмĕ?
Хĕллехи çил тăвăлсем
Иртсе кайрĕç таçталла,
Йĕри-тавра çырмасем
Йуxса анђĕç шавласа.
Тĕксĕм, сăнсăр тумтирне
Хыват варман васкаса,
Унтах унăн выранне
Ларат симĕс тумланса.
Варман илем илнипе
Саванаççĕ кайăксем,
Хăйсен тĕрлĕ сассипе
Тав-таваç ăна вĕсем.
Çутă хĕвел аппипе
Йештереççĕ куракксем,
Мăн улăхсем таршипе
Ӳссе тухаç ђеђексем.
Вĕсен аппĕ-амăшĕ —
Хура питлĕ сивĕ çĕр,
Ыра пиђђĕш аппашĕ —
Шутласассан — вĕçĕмсĕр.
Вăрмансемпе çарансем —
Ђеђек килĕ çурђĕсем,
Вĕçсе çӳрен кайаксем
Унăн хăни-хурăнташсем.
Çаран, варман ђеђекне
Пырса кураç нăйласа
Килĕшӳллĕ кил-йышпе
Ĕçлĕхлĕ пыл хурђĕсем.
Хăйсен çемçе сассипе
Пурнăç йĕрки йуррипе,
Йурлаç вĕсем ирсемпе
Ђеђек пуçĕ тăррипђе.
Тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем
(Ђеђек кӳрши-аршисем)
Кĕтмен-туман çĕртенех
Пырса кайаç кунсерен.
Тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем —
Ђеђекĕн ыр хăнисем,
Иртен-çӳрен кунсенђе
Ђуп тăваççĕ ђеђеке.
Мăн кăмалла çыннисем —
Çĕр çинђи ђăн паттăрсем
Ђеђек çумĕн пынипе
Манаç пурнăç йӳççине.
Ђеђек илем-шăршипе
Кайаç вĕçсе шухăша
Хăйсен ђĕри сисĕмпех
Пĕлеç илем ăçтине.

Хура пĕлĕт айĕнђен
Сив çумăрсем тухаççĕ,
Сасартăках хăш йенђен
Сăнсăр çилсем карлаççĕ.
Ђеђек кĕтмен çĕртенех
Ун тăшмансем ӳсеççĕ,
Саванăçлă кунсенђех
Унăн пуçне шыраççĕ.
Хĕрсе пурнас çĕртенех
Ђеђек пуçне касаççĕ,
Хăй çитĕннĕ килĕнђех
Ун пурнăçне татаççĕ.
Пĕтрĕ ђеђек пурнăçĕ
Иртрĕ унăн ĕмĕрĕ,
Ђеђекĕн ђĕр хăвасĕ
Пĕр самантра йăлт сӳнђĕ.
Ђеђек илем пĕтсенех
Вăл пыљђăкпа таптанђĕ,
Вăл пуррине-çуккине
Манђĕ тĕнђе çавăнтах.
Сывăх кӳрши-аршисем
Тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем,
Сурђĕç ђеђек йеннелле,
Унăн илем çук, тесе.
Ђеђек хăни-хурнташсем —
Вĕçсе çӳрен кайăксем,
Ђеђек куçран çухалсан,
Манђĕç унăн тĕлне те.
Ĕçлĕхлĕ пыл-хурђĕсем
Хăйсен çемçе йуррипе
Йурламаççĕ ђеђекшĕн
Паранмаст вăл уссипе.
Пит илемлĕ лĕпĕшсем
Ђуп-тумаççĕ ђеђеке,
Мăн кăмăллă çынĕсем
Кураймаççĕ илемне.
Ђеђекĕн ыр амăшĕ —
Хура питлĕ сивĕ çĕр,
Çакна курса пĕђђенех
Йеђĕ вĕри куççуљпе.
Ан йĕр вилнĕ ађушăн,
Ан так куççуљ вырăнсăр,
Вĕри куççуљ ђӳррипе
Таварайман пурнăçа.
Хитре ђеђек ĕмĕр пек
Иртсе кайат пирĕн те,
Хăйĕн ырă илемпе
Çамрăк вăхăт пурин те
Хура сăнсăр пĕлĕт пек
Пурнăç йӳççи тĕл пулат,
Çыннăн çамрăк ĕмĕрнех
Хăй сăнсăрпе вăл хуплат.

*Арис.*

# КРИТТИККĂ ПАЙĔ.

**Мађинниккăв. «Хисеплĕ вилĕм»** «Сунтал» 5 (11) №-р Пирĕн ђăвашла пйессăсем çук, теме хăйаймастпăр епĕр, мĕншĕн тесен, вĕсем пирĕн пурах. «Пуйан Карук», «Иђук», «Вахăтсăр вилĕм», «Хум», Хĕрлĕ Шайтан» «Пулхăр патшалăхĕн йулашки кунĕсем», „Сутра“, „Йалта“, т. ы. те, вырăсларан куçарни çинђен каламастпăр та Çапăнвă пйессăсем хушшинђе аванвисем те ђылай. Акă, сăмахрап, „Йалта» тенĕ пйессă вырăслисенђен те ӳксех йулмаст̆. Ку пйессă пирки епĕ çакна астăватăп. «Красная Новь» тенĕ шурналра епĕ пĕр вырăсла пйессă вулавăђĕ. йатне мавнă ентĕ. 1923-мĕш çулта Шупашкара çитсен ман алла «Йалта» йатлă пйессă çакланђĕ Çак пйессăна вулама тытăнсассăн епĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм Ку касвă-лартвă «Красная Новь» шурналра çапăнвă пйессă пекех, йађĕсем кăна урăх. Çакна курнă курманах епĕ А. Миххайлăв патне ђупрăм Вăт мĕн, Аньђи Хв Пав хăйĕн «Йалта» тенĕ пйессине хăй çырман вăт, вăл ăна çын йађĕсене улăштарса «Красная Новь» тенĕ шурналри пйессăна куçарса ђăвашла çапгарнă, тетĕп.

— Апла пулма пултараймаст̆, тет А.

— Мĕнле пулма пултараймаст̆, ĕн вместĕн пулсан епĕ сана вырăслине кăтартăм,—тетĕп епĕ.

Пăртак тавлашкаланă хыççăн епĕр пйессăсене автăрсем хăш вăхăтра çырниве йĕрлеме тытăнтăмăр.

Вырăсла пйессă тухиђђевех Хв. Пав. «Йалта» тенĕ пйесси çырăнвă пулнă иккен. Апла пулсан ку пйессăна вырăсларан куçарнă тени хăйех пĕтет. Вырăсла çыракан автăр та ђăвашсаран куçарманни ахалех паллă Çапла вара ку йапала, икĕ сĕр шухăшлă пйессă, икĕ вырăнта, икĕ çын пуçĕнђе пĕр вăхăтрах çуралнине пĕлтерђĕ. Ку пйессăсем пĕр пек иккенне Елмен те çавăрăнса пăхнă иккен.

Çак йапала ђăваш хушшинђе те („Йалта“ тенĕ пйессăра çырни) вырăс йалĕсенђе те пĕр пекех ĕçсем пулкалавине кăтартат̆. Вырăс çыраканĕ те. ђăваш çыраканĕ çав ĕçсене сăваса пйессăсем пĕр вăхăтрах çырнă. Еççиве çак йенђен пăхсан «Ђăваш ăсĕ кайра пырат̆» тенĕ халапра тĕрĕслĕх ытлах çуккине туйтарат̆.

Хăш пĕр пйессăн ĕмĕрĕ «ӳпре ĕмĕрĕ икĕ ерне» тенĕ пек виçĕ кунлăх кăна пулат̆, тепĕр пйессăн ĕмĕрĕ вăрăмрах пулат̆, ку вăл пурнăç йухăмĕ пйессăра мĕнле йĕрленсе йулнинђен килет. Авă, Шекçпир çырнă й паласен ĕмĕрĕ хађ те пĕтмен, çавăн пекех крек çыннисен тракетийĕсем те стсенăран тухсах пĕтеймеççĕха. «Кашни çимĕçĕн хăйĕн вăхăђĕ пулат̆», пйессăсенђе те ĕç çаплах тăрат̆. Çак йенђен пăхсан, пирĕн ђăвашла пйессăсем те «хăйсен ĕмĕрне кăна çутатаççĕ».

Мĕнле пйессăсене епĕр ырлатпăр? Пирĕн шухăшсемпе, тăнпуçпа килĕшекенĕсене. Кунран кун пулса пыракан ĕçсене. йе еппохăн сăнсăпатне аван çутатса паракансене. Шухăшсем тĕлĕшĕпе ĕçе аван кăтартса паракансене, ђĕлхе тĕлĕшĕпе çăмăл ăнлавмалла, илемлĕ çырнисене.

Пирĕн ђăвашла пйессăсем хушшинђе еппоххă сăнсăпатне çутатакан пйессăсем çук, теме те пултараймастпăр епĕр. Пирĕн пйессăсем пурнăçăн пĕрпĕр йенне кăна çутатаççĕ. «Пуйан Карукка» илсен, вăл «хыт кукар», «çĕрме пуйан» пурнăçне, унăн йăлисене çутатма тăрăшат̆ (пур йенђен те çутатсах параймаст̆). Ытти пйессăсенђе те çавăн йеврĕлех пурнăçăн ытти татакĕсем çуталаççĕ Малинниккăв пйесси те çавăн пекех.

Пйессине Мађинниккăв

«Хам йулташа, Иван Ларионова

асăнса çыратăп».

тесе пуçлат̆.

Еç революци вăхăтĕнђе, 1921-мĕш çулсенђе, çуркунне пулса иртет.

Иван Ларионăв революци ывăлĕ. Çӳлтен хушнипе вăл çуртри вăрлăхне акана тухађђен пĕр пĕр килеге пух а хурас ĕçе тунă Ку ĕçе Совет правиттĕлстви вăрлăха хресђенсем çисе ан пĕтерђĕр, вăрлăха çуракиђен сыхласа усрас, тесе тунă. Ку ĕç хресђенсемшĕн те усăллă пулнă. Çак усăллă ĕçе тума Иван Ларионăв хăйсен йалĕнђе тимлесех тытăнвă Анђах вăл вăхăтра Совет тăшманĕсем хресђенсене йеопле пăтратса çӳрме тăрăшнине такам та астăват̆ пулĕ Тăшмансем еçленипе вăл вăхăтра Кронштатра та, таса ытти вырăнсенђе те пăлхавсем пулкаларĕç. Ђăваш оплаçĕнђе те çав пăлхавсен сыпăкĕ паларђĕ Çак еççене Малинниккăв Иван Ларионăв ĕçĕ çинђе кăтарт̆ат̆.

Иванăн ашшĕ, ытти кил хуçисем пекех хăйĕн пӳртĕнђе хăйне хуçаран та хуçа тытасшăн. Хăйĕн йурагнă сăмахĕсемпе «тĕрĕм, терĕм, ђорт терĕм», текелесе вăл арăмне те (Хрестука)

— Ăçта ђупса çӳрерĕн?.. йал тăрăх йатă пек ђупса çӳресенни «тесе кӳрентерсе пĕтерет», ăна хăйне вађђи тапак турамантăн та çийет (тапакне лартса тунă çĕрте хăй пырса тĕкĕнмен пулин те), арăмне вăл хĕнет те, тата ытти асап, хĕнхурсем те кăтартат̆. Пуриньђен ытла Ларивана Иван тарăхтарат̆.

Лариванăн Петĕр калани: «хĕрарăмсене упăшкисене хирĕç тăма вĕрентеç, ађисене ашшĕамăшне хирĕç калама вĕрентеç! Çамрăксенђен те тĕлĕнмелле ку ђухне. ватгисене итлеме пăрахрĕç» тенĕ сăмахĕсем пит килĕшеççĕ. Урăхла пулма та пултараймаст̆. Ватисем революцие пĕрле çитнĕ йапаласене пĕлесшĕн те мар, çавăнпа та вăл «çăмарти ђăххинђен ан иртнĕ пултăр» тет ывăлне. Çавăнпа та Ивансен пĕтĕм кивĕлле шухăшлакансен шăршланнă йăлисемпе кĕрешмелле пулнă. Ивансен (Иван майлă шухăшлакансен) йышĕ сахал. Йал йышĕ пĕтĕмпе çĕннине хирĕç.

Çитменнине тата Иванăн савни, йуратни, «варли Лисук та ăна хирĕç ĕçех пырат̆» ан çырăн темскер комунне, тесе пĕтерет. «çырăнмасан. иксĕмĕр пĕрлешсе телейлĕ пурнăç тăвăпăр»,—тесе илĕртет, «апла тăк еппин пайантан есĕ ман мар, кирлĕ мар, кирлĕ мар есĕ мана», тесе хăратат̆; Ивана мĕнле те пулсан комунран «çăлса хăварма тăрăшат̆ вăйкăшса та пăхат̆, тарăхлат̆ те, ĕç тухмаст̆. Иван парăнмаст̆ «кĕрешес пулат̆ революци тăшманĕсемпе», тет вăл.

Ирĕке тухнă Ђăваш хĕрарăмĕ те хăйĕн сăмахне çӳлелле хăпартни курăнат̆. упăшкипе çĕтĕлсе пурнăкан Хреçтук, упăшки «пӳрђĕ сани мĕн? тесе ыйтнине хирĕç:

— Ман та мар, сан та мар,—иксĕмĕрĕн. Иксĕмĕр тунă ку пӳрте!,—тесе хурат̆.

Çав вăхăтрах йал йышĕ те «комунсем» çинђен шăппăн калаçат̆, «комунсем» вĕсене оввĕн курăнаççĕ.

ных экспедицией, предполагамых исследовательскими институтами Академии Наук, о выборе районов исследования, об'ектов исследования и т. д.

Вопрос чувашеведения, хотя и является старым вопросом, но в тоже время этот вопрос для нас является и новым вопросом, исходя из того, что наш чувашский мир еще не изучен. По всем этим вопросом Общ. Изуч. Местного края следовало бы пообсудить и договориться насчет летней работы с научно исследоввтельскими Институтами Академии.

Н. Золотов.

## Приветствие собранию т. т. чувашей, учащейся молодежи и красноармейцев, состоявшемуся 17-го декабря 1925 года в Ленинграде.

Привет вам, дорогие товарищи с Поволжья, и из вне Волжского Района, от трех научных учреждений, возглавляемых мною, —Государственной Публичной Библиотеки в Ленинграде, Российской Академии Истории Материальной Культуры и Яфетического Института Всесоюзной Академии Наук. Привет Вам от всех научных работников, ясно видящих в вас, —детях рабочих и крестьян, детях трудящегося населения, тех недостающих нам жнецов, которых ждет и не может долго ждать, (дело не терпит) современое общественное строительство. Мы не скрываем вовсе себе факта (вам лучше меня знать) что чуваши народ культурно отсталый, не по природным основаниям, а в итоге политики, убивавшей в них самосознание своей народной общественности и с нею творческую (на общую пользу человечества) активность. Вам лучше знать, как страдает от вашей культурной отсталости ваша повседневная трудовая жизнь на родине, без культуры, без научного знания окружающего вас в родном крае мира, мира физического и мира общественного, без научного знания производительных сил чувашской земли и производительных сил, общественной природы чувашского, не построить ничего прочного в чувашской ныне свободной земле, Автономной Советской Социалистической Республики Чувашии. Не построить ничего прочного без научного знания цифр и фактов, жизненных явлений вашего чувашского мира, без научного знания орудия вашего массового общения, подлинной природы редчайшего в мире по своим особенностям чувашского языка, без знания богатого древнейшими переживаниями человечества чувашского живого быта и чувашского живого народного права, без знания чувашских рукодельных достижений, не имеющих ничего равного в искусстве богатого шитья. Без наук, не только естественно-исторических, но и так называемых гуманитарных, не построить у вас человеческого житья-бытья в линии раскрепощающей советской политики, в линии требований современной общественности. Все более и более укрепляющаяся во всем нашем союзе, жизнью творимая смычка науки и труда, работы научных работников, даже теоретической, и производительных работ всякого вида и типа государственного или национального значения, работ всего многомиллионного трудового населения шестой части всего мира нигде так не выдвигает на первенствующее место культурного фронта, как среди культурно отсталых национальностей.

Ведь чуваши не одни культурно отсталый народ, в числе культурно отсталых народов не одни национальности с нерусским языком, громадные кретьянские и рабочие массы с русским языком в таком же положении, с таким гангреноприродным наследием от прошлого, невероятной культурной отсталостью и пока эта опасная болезнь не будет изничтожена, ни о каком здоровом общественном строительстве во всесоюзном масштабе, уже становящемся мерилом и мирового масштаба, ни о каком действительно здоровом национальном росте не может быть речи. Массовое низовое трудящееся население и массы столь-же, иногда еще более отсталых культурно вновь раскрепощенных национальностей не могут не продвигать на первенствующее место культурного фронта, но беда в том, что этот культурный фронт оголен, чрезвычайно слаб, можно смело и откровенно сказать, ничтожны наши силы, защищающие этот фронт. Научные работники черезчур малочисленны, чтобы взять на себя ответственную задачу необходимого у нас колоссального продвижения вперед культурного фронта, да и при всех заслугах и достижениях научной мысли и научного труда, у современной науки, выросшей в иных условиях и традициях. нет навыков и знания, нужных для работы к новой постановке научного дела, в условиях новых требований, предъявляемых к научным работникам, по делу культурно отсталых народов, в частности и чувашского народа, в науке нет вовсе знаний, и приращения, действительно приращения этих знаний ни от кого не приходится ждать, кроме как от сынов самих культурно-отсталых народов. Если без науки ничего нельзя строить, если культурно-отсталые народы, в том числе и чувашский народ не может ни себя осознать, ни свои силы правильно приложить к строительству без научных знаний и без всемерно напряженной активности по усвоению научной культурности, по продвижению культурного фронта своего народа с заднего двора на его подобающее место, то без этой интенсивной работы по самоокультурению отсталых культурно народов, без вашего, товарищи чуваши, активного участия в нашей работе наука не в силах выбиться из тупика, в какой она попала. Человечество, верхи человечества, с обслуживавшей культурные интересы наукой в путях мышления этих верхов, переживает кризис. В т. н. гуманитарной науке на Западе идеологический застой, мертвящая рутина или неразбериха, растерянность, отчаяние или утопические иследовательские поползновения. Давно сложившиеся изжитые научные мировоззрения разлагаются, при чем чувствующие крушение старых теорий и старых подходов к научным вопросам цепко хватаются за старые научные, казалось, незыблемые положения, не замечая, что они являют картину того, как утопающий хватается за соломинку. Но это не значит, что для новой мысли открыта торная дорога. Ратоборцами нового учения являются лишь отдельные мало авторитетные в масово работающих академических кругах молодые, не редко и более искушенные жизнью, силы, чаще лишь ищущие путей, не располагающие ничем прочно выработанным и не имеющие силы носителей массово-разделяемой научной мысли, нет коллективных организаций в путях нового научного мышления, нет рабочих сил для такой организации. Кризис переживает не старая наука, а вообще наука, вся т. н. гуманитарная отрасль науки, все общественные науки. Вот почему науке для самооздоровления необходим приток девственных сил, смычка с культурно отсталыми национальностями, их активность, ваша активность— единственная гарантия создания массового потребления предметов научного производства, она—наиболее действительный путь к тому, чтобы изжить как общественную язву, ненаучность и некультурность, так кризис нашей науки, кризис общественных наук, науки по истории материальной культуры, для работы над которой создана Академия Истории Материальной Культуры, равно кризис науки по языкам в новых путях, над которой силится работать также недавно созданный Яфтический Институт, оба учреждения или уже установившие тесный контакт с вашей культурной работой, национальной культурной работой чувашского народа, или разрабатывающие меры для такой же научно-культурной спайки. Государственная Публичная Библиотека, формально не провозглашаемая всесоюзной, но больше, чем какое-либо иное научно-культурное учреждение, имеющая возможность и пользующаяся ими для обслуживания союзных и автономных республик, уже давно ведет такую во вне работу, используемую научными работниками вашего столичного сосредоточения, города Шубашкара, и ведет посильную по средствам внутреннюю работу по отображению в жизненном распорядке печатных и рукописных своих фондов производства книжного, вообще письменного дела всех национальностей, и в числе их чувашской национальности, и мы надеемся, более того—уверены, что во всех наших научных и культурно-просветительных предприятиях найдем полную поддержку чувашского народа, обеспеченную пониманием вас, молодого культурного авангарда чувашской национальности, который не может упускать случая, находясь в Ленинграде, в центре научной мысли, не только старой. но и новой, в первом пролетарском городе мира, не может упускать случая, какую бы не вел он здесь работу, приобщаться к научной культурности, знакомиться с научными учреждениями. Вот почему, а не из пустого лиризма или в порядке акта вежливости в ответ за сердечный прием и оказанное нам в чувашской среде всяческое содействие, я пришел приветствовать вас, товарищи.

Да здравствует чувашский народ, да не отступит его молодой культурный авангард в своем необходимом для всех победоносном шествии по пути продвижения своего собственного национального, и вместе с тем нашего общего всесоюзного культурного фронта.

# „Сунтал“ ретаксине маттерийалсем йанӑ йулташсене.

Ҫакӑнта катартнӑ йапаласем техникӑ йенђен йе тата ӑшђикки йенђен килӗшеймен пирки «Сунтала» кӗреймеҫҫӗ.

### Сӑвӑсем:

Михейӗв И. — Сар хӗре; Крылов — Ҫӗнӗ пурнӑҫ патнелле; Виҫкуҫ — Йалкор шухӑшӗ; Трофимов — Х ҫат'ҫырса илерни; Иветоран пуштӑ; Васҫилков — Кӗркунне; А. Н. К. — саванасси-хурланасси; Ђутак — Самрӑк вилӗм; Пиш — Вӑранаҫҫӗ; Спиритонӑв — Салам; П-ти В. — Уҫҫан йултӑмӑр; Тихонов — тавах; Шӑнкал — Хӗлле ҫул ҫинђе; Наттин — Ђулхула М. ађисен йурри; Павлин — Вӑрҫа йуррнђен; Осипов — 4-сава; Хыр — ҫитет хуйхӑрма; Киремет — Ҫалпуҫ йалкорӗ; Соловйов — Ђаваш танлашрӗ; Йаковлӗв — Сӳнсе пӗтрӗ; Октапреноk — Хӗрлӗ йалав; Танилав М. — Ђапта; Хыр — Паравос; Овђинникӑв — 2-сӑвӑ; Пӗремӗк — пусмӑрлӑха сирпӗтни; Вӗри Карђӑк — Пирӗн шухӑш; Волков — Ӑнланманни.

### Калавсем:

Крикорйев Т. — Ҫул ҫинђи халап; Хураҫка — Выҫлах ҫул; Афанаҫйӗв К. — Кашарни; Мађ — Ҫветкасем; Тинехпи — Тӑлӑхан савви.

**Репуссем**: Миронов — Хресђен ђаваш йероплание тума пулӑш; Уй куҫлӑ — вӑрман халхалла.

**Пйессӑсем:** Малинникӑв — Манах ҫелекӗ; Танилав — Ҫухална-ђе тупӑнђе; Тимофейӗв К. — Тӗрлемессем Хӗветӗр.

Миронава (Аслӑ Тайапа) „Савни ҫырӑвӗ“, «Интерес катартни», «Такмаксем» Сунтала кӗреймерӗҫ.

Курйӗва «Ђухан ҫын пурнӑҫӗ», «Хӗллехи ир», «Йаранаҫҫӗ» йатлӑ сӑвӑсем кӗмеҫҫӗ. Техникӑ тӗлӗшӗнђен ҫитменлӗхсем нумай.

Ђӗрӗпе (кунта) «Ђаваш ђӗлхи» сӑвӑ кӗмест.

Роман Йурисне (Ҫӑлпуҫ) «Пир ҫапни», «Ҫутталла», «Пӗђӗк паттӑр» кӗмеҫҫӗ.

Ваҫҫилйӗва (Пойруйас) «Пӑшал йурри» кӗреймест.

Трассукин «Пыл хурђӗ», Томасӑв «Асапсем айӗнђе» йатла сӑвӑсем кӗмеҫҫӗ.

Палипав (Совпартшкул) «Ирӗклӗхшӗн кӗрешекенсем» йатлӑ калава пӗтӗмпех ҫырса Канаш сойусӗн Совпартшкулти йађейккинђе сӳтсе йавӑр.

К. Икнатйӗва «Вӗренни кӗвенте мар, хулпуҫҫи урлӑ хурса ҫӳрес ҫук» йатлӑ пӗђӗк пйессӑ кӗмест. Шухашсем уҫӑмлах мар.

Пађука «Йуратнӑ савнӑ хӗр», «Йалти сӑвӑсем», «Сӑвӑсем» кӗреймерӗҫ. Техникӑ тӗлӗшӗнђен йусавлӑрах ҫырма тӑраш.

Иларионава (Совпартшкул) «Асапла вӑхӑтсем» йатлӑ пйесса Сунтала кӗмест. Пйессӑра килӗшӳсӗр тӗлсем нумай. Киђемлӗрех йапала хутошӗство тӗлӗшӗнђен те ҫитменлӗхсем нумай.

Йуманайа «Ӳлӗм пуласси», «Ђун савнине» кӗмеҫҫӗ.

Октапренака «МОПР», Карӑша «Пионерсен пурнӑҫӗ», «Атал ҫинђи прахут» кӗмеҫҫӗ.

Аттайа, Карӑша, Пӗђен ађапа. Репуссем кӗмеҫҫӗ.

Танарка (Вӑрнар) «Тӗттӗмлӗх», Сайтсӑва (Кошшелей) «Пуп йурри», Луккин „Ђӑпта ҫапакансен пурнӑҫӗ“, Йӗнел «Павлӑв йулташ», «Вайран вакӑр тухаҫ», «Нађар ӗҫ», «Ђапла ӗҫлет», «Тамма ывалӗ» йатлӑ сӑвӑсем кӗмеҫҫӗ.

Лепӗтӗва «Выҫӑ пуп» йатлӑ пйессӑ кӗмест.

Пођђакова (Ҫӗрпӳ) «Ленин хушнӑ ҫулпа», Комсомол» — кӗмеҫҫӗ.

### Репуссем йанӑ йулташсене

Пађура Иванӗ (Хаҫат урлӑ йал хушшине ҫутӑ сарар); Улӑпа (Сыва пултӑр ђаваш ҫырулахӗ. Сыва пултӑр Ленинисӑм. Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ); Карӑша (Пӗтӗм акронома сапаласатпӑр ҫӑра алӑпа) — „Сунтала“ кӗреймеҫҫӗ.

# САТАЂЂӐСЕМ:

1. Малалла вуласан та, кайалла вуласан та епӗ пӗр самахах.
2. Йал варринђе мӗн ларать?

Туприсов Ив.

### Сатађђӑ туппи.

«Сунталӑн» 12 (18) №-рӗнђи сатађђа ҫак йулташсем тӗрӗс тупнӑ:

Кутревтсӑв (Тикеш), Карпӑв (Шуркасси), Тихӑнӑв (Пуптапа), Иванов («Инвалит» копператтив ђлевӗ), Влатимиров (Хирлеп), Арҫук Йакурӗ (Кӳл-хӗрри Хапӑс), Хурђака Петӗрӗ (Йанкалђ), Йекоров Ал. (Ҫӗнӗ Пӗршенер), Матвейӗв П. (Шупашкар), Афанаҫйӗв К. (Йамаш), Крикори Матвейӗвпа Петр Фетотӑв (Куђкешево йалӗ), Курйӗв Н. (Сӗнӗ Кавал), Шашков Куҫма (Ђупай), Танилӑв П. (Кӗтеснер), Куҫмин (Елтимер), Макарӑв К. (Петтехниккӑм), Карков Ан. (Сентимӗр).

Туппи ҫапла: Сахар Илйин йака ђулӗсем уйарӑмӑн ҫакӑн ђухлӗ тайнӑ: пӗри — 1 кӗр; иккӗмӗшӗ — 3 кӗр; виҫҫӗмӗшӗ — 9 кӗр; тӑваттӑмӑшӗ — 27 кӗр.

Ответственный редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 539. Зак. № 184. Чебоксары, типография школы ФЗУ. Тираж 2350.

# В КНИЖНОМ МАГАЗИНЕ ЧУВАШГИЗА

# „НОВАЯ КНИГА“

## Имеются следующие книги:

- К. Маркс. Капитал в общедоступной обработке Ю. Борхата . . . 1 р. 50 к.
- Хрестоматия для маркситских кружков вып. I . . . . . . 2 р.
- Проф. А. Н. Скворцов. Основы экономики земледелия . . . . 3 р.
- Баскин-Чудновцев. Систематическая хрестоматия по марксизму т. I . . . . . . . 1 р. 45 к.
- Голубков В. В. Марксистская хрестоматия по литературе . . 2 р. 25 к.
- Дарвинизм и марксизм . . . . 1 р. 20 к.
- Сборник статей Отто Бауэра . 90 к.
- Календарь коммуниста на 1926 год 1 р. 75 к.
- А. М. Гинзбург. Экономия промышленности . . . . . . . 2 р.
- Н. Н. Попов. Очерк истории В.К.П. (б) . . . . . . . 1 р.
- Бела Кун. Коминтерн в резолюциях . . . . . . . . . 1 р. 40 к.
- С. Семковский. Марксистская хрестоматия для юношества . . 1 р. 40 к.
- А. И. Тюменев. История труда . 70 к.
- Искуство и литература в марксистском освещении ч. 1 . . . 2 р. 75 к.
  часть 2 . . . 3 р. 80 к.
- Н. Бухарин. Теория исторического материализма . . . . 1 р. 20 к.
- М. Вольфсон. Учебник политграмоты для нормальных школ в. I . . . . . . . . . 80 к.
- Вл. Сарабьянов. Экономика и Экономическая политика СССР. 1 р. 75 к.
- Хрестоматия по истории классовой борьбы в России . 2 р.
- Ц. Ленин. Экономическая политика . . . . . . . . . . . 1 р. 85 к.
- Хрестоматия по ленинизму . . . 2 р.
- А. Чекин. Учение о проф союзном движении . . . . . . . 1 р. 60 к.
- Ф. Николаи. Биология войны . . 2 р.
- Крестьянский корреспондент, его роль и его работа . . . . 1 р. 25 к.
- Арп. А-н. История рабочего движения в Англии, Франции и Германии . . . . . . . 95 к.
- Генри Форд. Моя жизнь, мои достижения . . . . . . . . 1 р. 10 к.
- М. Б. Вольфсон Очерки обществоведения . . . . . . . 1 р. 10 к.
- Г. Плеханов. К вопросу о развитии монистического взгляда на историю . . . . . . . 80 к.
- С. Моносов. История революционных движений . 1 р. 20 к.
- Н. Росницкий. Лицо деревни . 70 к.
- Проф. М. И. Соболев. Очерки финансовой науки . . . 1 р. 10 к.
- Ф. Шетулинский. Политическая азбука . . . . . . . . 55 к.
- А. В. Шестаков. Наемный труд в с-х России . . . 1 р. 20 к.
- А. П. Станчинский. Политграмота . . . . . . 90 к.
- Спутник пионера на 1926 г. . . 60 к.
- К чему должен стремиться и кем должен быть комсомолец . 20 к.
- Памятка юного пионера 20 к.
- Сборник для пионерских клубов . 75 к.
- Антирелигиозная кампания среди пионеров . . . . . . . 70 к.
- Библиотека пионеру . . . . . 1 р.

С требованием просим обращаться: г. Чебоксары, ЧАССР

**БОЛЬШОЙ ВЫБОР** общедоступной сельско-хозяйствен., комсомольской и пионерской литературы. **УЧЕБНИКИ:** по русск. языку, математике, естесвознан., литературе, счетоводству, физике, химии, педагогике и по всем отраслям общественно-политической литературы.

**ПОРТРЕТЫ ВСЕХ РЕВОЛЮЦИОННЫХ ВОЖДЕЙ**

**ЗАКАЗЫ ВЫПОЛНЯЮТСЯ И НАЛОЖЕННЫМ ПЛАТЕЖОМ**

КРАСНАЯ ПЛОЩАДЬ, КНИЖНЫЙ МАГАЗИН „НОВАЯ КНИГА“